ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Октябрь
21
юнкун
№ 206 (9115)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăрту (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. Йĕпреç (1 стр).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: КПСС райкомĕсен пленумĕсем (2 стр.).
ХАÇАТСЕНЕ ПАХСА ТУХНИ. Суту-илӳ ыйтăвĕнчен пăрăнмалла мар (2 стр.).
И. Сапожников.—Чăваш чĕлхин хăшпĕр кăткăс ыйтăвĕсем (2 стр.).
1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе лайăх иртерер (3 стр.).
Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ (4 стр.).
Китайра И. В. Сталин Сочиненийĕсене пичетлесе кăлараççĕ (4 стр.).
Совет кинофильмĕ пĕрремĕш преми илнĕ (4 стр.).
Китай Халăх Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Чжоу Энь-лай Корея ыйтăвĕ тăрăх политикăлла конференци иртерес пирки янă çыру (4 стр.).

Ялхуçалăхне пулăшасси—промышленность предприятийĕсен хисеплĕ тивĕçĕ

Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пирĕн çĕршывра халăха кирлĕ промышленность таварĕсемпе ялхуçалăх продукчĕсем нумайран та нумай пулмалла. Çав задачăна ĕçре татса парасси коммунизм строительстви программин чи кирлĕ пайĕ пулса тăрать. Хальхи условисенче вăл задача пирĕн умма пĕтĕм халăхăн чи кирлĕ задачи пулса тухса тăчĕ.

Социализмла ялхуçалăхне малалла аталантарасси—пĕтĕм совет халăхĕн тивĕçĕ. Çак енĕпе промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсем умĕнче те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсем колхозсене, МТС-сене, совхозсене ялхуçалăх машинисем, оборудовани, тĕрлĕ материалсем çителĕклĕ парса тăма тивĕçлĕ.

Пирĕн республикăри промышленность предприятийĕсем социализмла ялхуçалăхĕ валли чылай йышши япаласем туса кăлараççĕ. Вăрман промышленноçĕ хатĕрлекен пĕрене, хăма, Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Вăрнарти, Улатăрти предприятисем туса кăларакан ялхуçалăх машинисен пайĕсем, химикатсем, кусса çӳрекен мастерскойсем, силос башнисем, урапа-çуна, катка-пичке, савăт-сапа тата ыттисем те çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене саралаççĕ. Кунсăр пуçне, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсем республикăри колхозсемпе МТС-сем валли строительство материалĕсем, ут таврашĕсем, пăяв чылай туса кăлараççĕ.

Буинскинчи хăма суракан завод, Вăрнарти, Çĕмĕрлери вăрманпромхозсем тата ытти малта пыракан чылай предприятисем ялхуçалăхне аталантарма кирлĕ япаласем туса кăлармалли заданисене тăтăшах ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Çĕмĕрлери йывăç япаласем туса кăларакан завод коллективĕ, партин Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ йышăннă решенисемпе хавхаланса, çулталăкри плана срокчен тултарма, планран иртерсе ялхуçалăхне кирлĕ продукци 2,5 миллион тенкĕлĕх туса кăларма пулнă. Анчах хăшпĕр предприятисем хăйсен тивĕçне пурнăçласа пымаççĕ, вĕсен руководителĕсем плана çирĕплетнĕ номенклатурăпа ассортимент тăрăх тултарассишĕн ответлăха туймаççĕ. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ кирпĕч, известь, черепица, урапа-çуна туса кăлармалли тăхăр уйăхри плана тултарманни, паллах, республикăри ялхуçалăхне аталантарма пулăшмасть. «Чувашлес» трестпа «Чувашдрев» трест япăх ĕçленипе колхозсем, МТС-сем, совхозсем пĕрене, хăма çителĕклĕ илсе тăраймаççĕ. Малашне çавăн пек çитменлĕхсене пĕтермелле. Предприятисен, тивĕçлĕ министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсен ялхуçалăх ыйтăвĕсене вăхăтра, туллин тивĕçтерессине пысăка хурса хакламалла, рабочисене, инженерсемпе техниксене, служащисене государство çирĕплетсе панă плана пур кăтартусем тăрăх та тултарса пыма мобилизацилемелле.

Малта пыракан предприятисен коллективĕсем, производство планне ăнăçлă тултарса пынă вăхăтрах, колхозсене те пысăк пулăшу параççĕ. Шупашкарти электроаппаратура завочĕн коллективĕ Шупашкар районĕнчи Ильич ячĕпе тăракан шефа илнĕ колхоза нумай пулăшать. Заводри пропагандистсемпе агитаторсем колхозниксем хушшинче лекцисемпе докладсем иртереççĕ. Заводри парторганизаципе дирекци Ильич ячĕпе тăракан колхоза малти вырăна кăларма задача лартнă.

Улатăрти пăравуссем юсакан завод Калинин ячĕпе тăракан колхозра фермăсене водопровод кĕртме пулăшать, колхоза электричество энергийĕ парса тăма палăртать. Çĕмĕрлери экстракт тăвакан «Большевик» завод чылай колхозсене электричество энергийĕ парать. Шупашкарти тарасасем юсакан завод коллективĕ тăрăпа çĕрĕк тăпринчен чӳлмексем туса кăлармалли станоксем хатĕрлеме тытăннă.

Республикăри чылай предприятисен коллективĕсем нумайранпа колхозсене пулăшаççĕ. Ĕлĕкрех вĕсем ялта политикăлла-массăлла ĕçе йĕркелеме, хăшпĕр чухне тырпул пухса кĕртме пулăшнă. Предприятисен представителĕсем колхозсенче сахал пулнă, вĕсем обществăлла хуçалăха мĕнле йĕркелесе ертсе пынипе кирлĕ пек интересленмен. Халĕ предприятисемпе колхозсем хушшинче çирĕп çыхăну саралать. Рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем колхозсене йывăр ĕçе механизацилеме, ялсене электрификацилеме тата радио кĕртме, ăста кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме пулăшаççĕ, хăйсен производстври çӳлте тăракан культурипе паллаштараççĕ.

Анчах хăшпĕр предприятисен руководителĕсем ялхуçалăхне малалла аталантарас ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланса çитмен. Пленум решенийĕсенчен тивĕçлĕ вывод туман. Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ, «Легпромстройăн» 11-мĕш тресчĕ, Чăлха фабрики, Атăл леш енчи торф предприятийĕ юлашки вăхăтра шеф ĕçне тума пăрахнă. Куславккари суртсем тăвакан завод, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь, Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ тата ытти предприятисем те колхозсене сахал пулăшаççĕ.

Партин облаçри комитечĕн VII-мĕш пленумĕ предприятисенчи парторганизацисем умне çĕнĕ те пысăк требованисем кăларса тăратрĕ. Предприятисенчи парти организацийĕсем колхозсенчи парторганизацисене колхозниксем хушшинче политикăлла тата культурăлла ĕçсем тума пулăшма пултараççĕ, пулăшма тивĕçлĕ те. Фабрикăсемпе заводсен, стройкăсен колхозсене йывăр ĕçсене механизацилеме, клубсемпе вулав çурчĕсем валли оборудовани тупма пулăшас пулать.

Уйрăмах хуласем çывăхĕнчи колхозсене çĕрулмипе пахча çимĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшас пулать. Предприятисен коллективĕсем, хăйсен производство программине тултарас ĕçре чăрмав кӳмесĕр, шефа илнĕ колхозсене теплицăсем, парник рамисем тума пулăшма пултараççĕ.

Промышленность предприятийĕсен тепĕр пысăк задачи вăл—ялхуçалăхне кадрсем парса пулăшасси. Предприятисенче çĕнĕ техникăна алла илнĕ, йывăр ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе пысăк опыт туянă инженерсемпе техниксем нумай. Партипе правительство йышăннă решенисемпе хавхаланса, предприятисенче ĕçлекен чылай специалистсем колхозсемпе МТС-сене кайма кăмăл турĕç. Анчах çав паха пуçарăва нумай çĕрте сармаççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ çакăн пек тума хушса хăварчĕ: ĕлĕкрех ялхуçалăхĕнче ĕçленĕ специалистсене шута илмелле, вĕсене партипе правительство лартнă задачăсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла, колхозсемпе МТС-сене каялла таврăнма пулăшмалла. Яла кайма кăмăл тунă специалистсене чарса тăнине, çав ĕçре тĕл пулакан бюрократизмпа волокитăна хирĕç татăклăн кĕрешмелле.

Промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен кашни работник çакна лайăх пĕлсе тăтăр: социализмла ялхуçалăхне мĕн вăй çитнĕ таран пулăшасси—унăн таса тивĕçĕ. Ялхуçалăхĕ мĕн чухлĕ хăвăртрах малалла аталанса пырĕ, пирĕн Тăван çĕршыв çавăн чухлĕ вăйлăрах та тĕреклĕрех пулĕ, совет çыннисен пурнăçпа йăла условийĕсем тата культури хăвăртрах ӳссе пырĕ.

Хуласемпе районсенчи партипе совет организацийĕсем шеф ĕçне йĕркелесе ертсе пыма тивĕç. Çав ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларни сиен кӳме çеç пултарать. Пленум иртнĕренпе чылай вăхăт иртрĕ. Апла пулин те КПСС Шупашкар, Канаш, Улатăр хула комитечĕсемпе Çĕмĕрле райкомĕ колхозсене социализмла пулăшу парас ĕçе кирлĕ пек сарса яман-ха. Çак пысăк çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерес пулать.

Ялхуçалăхне пулăшасси—промышленность предприятийĕсенче, стройкăсенче, транспортра ĕçлекенсен патриотла тивĕçĕ. Колхозсене социализмла пулăшу пани рабочисемпе колхозла хресченсем хушшинчи туслăх çирĕппине, хулапа ял хушшинчи çыхăну вăйланса пынине пĕлтерет. Социализмла ялхуçалăхне пур енчен те пулăшса пыни партипе правительство совет халăхĕ умне лартнă задачăсене чыслăн пурнăçлама пулăшать.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсем тăрăх кăларнă фильмсен Пĕтĕм Союзри фестивальне иртерме хатĕрленни

СССР Культура министерстви агротехникăлла фильмсен Пĕтĕм Союзри фестивальне иртерме йышăннă.

Декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа виçĕ уйăх хушши çĕршыври совхозсенче, колхозсенче, МТС-сенче ялхуçалăхĕ çинчен кăларнă чи лайăх кинокартинăсене кăтартма тытăнаççĕ.

Хальхи вăхăтра кинопрокатăн вырăнти уйрăмĕсенче ялхуçалăхĕ çинчен кăларнă 130 кинокартинăн 28 пине яхăн копийĕ шутланать. Фестиваль вăхăтĕнче сеанссем пуçланас умĕн лекцисемпе докладсем пулса иртеççĕ, ученăйсем колхоз производствин практикĕсемпе тĕл пулаççĕ.

Сахăр туса кăларасси ӳсет

АЛМА-АТА, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Казахстанри сахăр промышленность предприятийĕсем çак вăхăт тĕлне, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, çур миллион пăт нумайрах сахăр туса кăларнă.

Аслă Октябрь уявĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, Джамбулри комбинат тата Меркенпа Карабулакри заводсен коллективĕсем хăйсен ĕçĕсене лайăхлатса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра пĕр центнер сахăр туса кăларма иртнĕ çулхинчен 50 килограмм сахалтарах кăшман расходлаççĕ. Заводсем иртнĕ çулхипе танлаштарсан талăк хушшинче 17 процент ытларах сахăр туса кăлараççĕ.

ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔНХИ ĂМĂРТУ

* * *

Çул тăвас тĕлĕшпе ăмăртса ĕçленин итогĕсем

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çакна палăртнă: 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе пыракан социализмла ăмăртăвăн условийĕсене Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Тăвай, Чкаловски, Шăхасан, Муркаш, Ишлей районĕсем тата 243-мĕш çул участокĕ пурнăçланă.

Виççĕмĕш кварталта Йĕпреç, Шăмăршă, Красноармейски, Сĕнтĕр, Вăрнар, Кувакино, Октябрьски, Первомайски, Етĕрне районĕсем, 241-мĕш тата 240-мĕш çул участокĕсем, машинăсемпе çул тăвакан 50-мĕш станци çителĕксĕр ĕçленĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла **йышăннă:**

1. Районсемпе çул участокĕсем хушшинче çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта социализмла ăмăртура **Сĕнтĕрвăрри районĕ** мала тухнине палăртас. Çак район материалсем хатĕрлемелли тата турттармалли çулталăкри плана 163 процент, чул сарса çĕнĕ çулсем тумалли тата киввисене тĕпрен юсамалли плана 167 процент, ахаль çулсем тумалли тата юсамалли плана 133 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли тата юсамалли плана 260 процент, çĕр чавса купаламалли плана 117 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 100 процент, ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана 108 процент тултарнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрри районĕнчех хăвармалла тăвас (райисполком председателĕ **Чумакова** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Жирнов** юлташ).

2. 1953 çулхи виççĕмĕш кварталта çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе çак районсем лайăх ĕçленине палăртас:

Шупашкар районĕ (райисполком председателĕ **Семенов** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Егоров** юлташ). Çак район материалсем турттарса кăлармалли плана 150 процент, чул сарса çĕнĕ çул тумалли тата киввисене юсамалли плана 149 процент, çĕр чавса купаламалли плана 112 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли плана 136 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 160 процент, ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана 106 процент тултарнă;

Тăвай районĕ (райисполком председателĕ **Павлов** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Васильев** юлташ). Çак район материалсем турттарса кăлармалли плана 134 процент, чул сарса çĕнĕ çул тумалли тата киввисене юсамалли плана 135 процент, ахаль çул тумалли тата юсамалли плана 100 процент, çĕр чавса купаламалли плана 123 процент, кĕперсемпе трубасем тумалли плана 124 процент, çулсем хĕррине йывăç лартмалли плана 156 процент, ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана 101 процент тултарнă;

Ишлей районĕ (райисполком председателĕ **Николаев** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Андреев** юлташ), **Чкаловски районĕ** (райисполком председателĕ **Юлдашев** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Цыганов** юлташ), **Шăхасан районĕ** (райисполком председателĕ **Иванов** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Лаврентьев** юлташ), **Муркаш районĕ** (райисполком председателĕ **Петров** юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ **Архипов** юлташ), **Çĕрпӳри 243-мĕш çул участокĕ** (участок начальникĕ **Муткин** юлташ). Çак районсем тата çул участокĕ плана пур кăтартусем тăрăх та тултарнă.

3. Çул-йĕр строительстви тĕлĕшпе çак райисполкомсем начар ĕçленине палăртас: Йĕпреç райисполкомĕ (председателĕ Васильков юлташ), Шăмăршă райисполкомĕ (председателĕ Васильев юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Пименов юлташ), Красноармейски райисполкомĕ (председателĕ Федоров юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Иванов юлташ), Сĕнтĕр райисполкомĕ (председателĕ Петров юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Никольский юлташ), Кувакино райисполкомĕ (председателĕ Леонов юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Филиппов юлташ), Первомайски райисполкомĕ (председателĕ Савинов юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Пикаев юлташ), Октябрьски райисполкомĕ (председателĕ Христофоров юлташ, çул-йĕр пайĕн заведующийĕ Леонтьев юлташ), 240-мĕш çул участокĕ (начальникĕ Барашкин юлташ), 241-мĕш çул участокĕ (начальникĕ Жарков юлташ).

4. Йĕпреç райисполкомĕн председательне Васильков юлташа, Шăмăршă райисполкомĕн председательне Васильев юлташа, Кувакино райисполкомĕн председательне Леонов юлташа, Красноармейски райисполкомĕн председательне Федоров юлташа, Сĕнтĕр райисполкомĕн председательне Петров юлташа, Вăрнар райисполкомĕн председательне Иванов юлташа, Октябрьски райисполкомĕн председательне Христофоров юлташа, Первомайски райисполкомĕн председательне Савинов юлташа, машинăсемпе çул тăвакан станцин директорне Подклетнов юлташа, 240-мĕш çул участокĕн начальникне Барашкин юлташа тата 241-мĕш çул участокĕн начальникне Жарков юлташа колхозсенче, машинăсемпе çул тăвакан отрядсенче тата дистанцисенче социализмла ăмăртăва организацилеме, ялти вăйпитти çынсене çул-йĕр строительствине хутшăнтармалли плана ноябрĕн 1-мĕшĕччен, государство çирĕплетсе панă çул-йĕр строительстви планне пур кăтартусем тăрăх та 1953 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултармалла тума хушас.

* * *

Строительсен хастарлăхĕ

Шупашкарти пир-авăр комбинатне тăвакан строительсем хушшинче социализмла ăмăрту кунтан-кун вăйланса пырать. Участоксем хушшинчи ăмăртура пурăнмалли çуртсем, культура тата йăла учрежденийĕсем тăвакан участок коллективĕ малта пырать. Ку участок икĕ уйăх ĕнтĕ трест управленийĕпе постройкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне хăй аллинче тытать.

Аслă уяв ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, участок коллективĕ 2.700 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем туса пĕтерессишĕн, 450 çын вырнаçмалли общежити юсаса хатĕрлессишĕн, çăкăр заводне туса пĕтерсе ĕçе ярассишĕн кĕрешет. Урачаев, Назарова тата Рыбакова юлташсем ертсе пыракан мостовщиксен бригадисем, уяв ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, Калинин урамĕнчи çул çине чул сарнă çĕрте задание куллен 200—250 процент таран тултарса пычĕç. Октябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне вĕсем чул сарса çитерчĕç. Халĕ вĕсем çăкăр завочĕ патĕнче 2.000 тăваткал метра яхăн территорие асфальт сарса лайăхлатаççĕ.

Çăкăр завочĕ тунă çĕрте хĕрӳллĕ ĕç пырать. Азимов юлташ ертсе пыракан монтажниксен бригади оборудовани вырнаçтарса лартать, Моисеев юлташ ертсе пыракан слесарьсен бригади пăс хуранĕсене, пăрăхсене вырнаçтарса лартать, канализаци тăвать. Назарова юлташ ертсе пыракан бригада штукатурка тăвас, урай сарас ĕçе хăвăртрах вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешет.

Строительсен творчествăлла активлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Максимовпа Толчин юлташсем ертсе пыракан платниксен бригадисем ĕç нормине куллен 150 процент, Климов юлташ ертсе пыракан малярсен бригади 200 процент таран тултарса пыраççĕ.

Юлашки вăхăтра каменщиксем комплексла меслетпе ĕçлеме тытăнчĕç. Çĕнĕ меслет ĕç тухăçлăхне ӳстерчĕ, строительство пахалăхне лайăхлатрĕ.

Участок коллективĕ пысăк çуртсем лартма хатĕрленет. Пĕр экскаваторпа 51 хваттерлĕ çурт валли никĕс хывма çĕр чаваççĕ. 41 хваттерлĕ çуртăн никĕсĕсене хываççĕ. Сергеев юлташ ертсе пыракан бригада 32 хваттерлĕ çурт тунă çĕрте нормăна 120—140 процент тултарса пырать. Çак кунсенче бригада кирпĕч хывса çитерет.

Косарев юлташ ертсе пыракан штукатурсен бригади Кирпичников юлташ ертсе пыракан бригадăпа ăмăртать. Косарев юлташ ертсе пыракан бригада çак уйăхра çуртăн тулашне штукатурка туса пĕтерессишĕн, иккĕмĕш бригада—урайсем сарса тата вентиляци вырнаçтарса çитерессишĕн кĕрешет.

Ялхуçалăх институчĕн çуртне тăвакансем пысăк активлăхпа ĕçлеççĕ. Дружинин юлташ ертсе пыракан каменщиксен бригади ноябрĕн 7-мĕшĕччен пысăк зал стенисене кирпĕч хывса çитерессишĕн ăмăртать. Парамонов юлташ ертсе пыракан бригада спорт залĕн стенисене тата кăнтăр енчи корпусăн пĕрремĕш хутне кирпĕч хывса пĕтерессишĕн кĕрешет. Ку бригада сменăра 14 пин кирпĕч хывать.

Кашни строитель Октябрь уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртать.

А. НИКИТИН,

«Легпромстройăн» 11-мĕш тресчĕн пурăнмалли çуртсем, культура тата йăла учрежденийĕсем тăвакан участок начальникĕ.

Çулталăкри плана тултарнă

ШĂХАСАН. Апат-çимĕç комбиначĕ пысăк çитĕнӳ турĕ. Комбинат коллективĕ, стахановла вахтăна тăрса, çак кунсенче çулталăкри производство программине чылай иртерсе тултарчĕ.

Ăмăртура сăра цехĕнче ĕçлекенсем малта пыраççĕ. Н. Краснова, М. Петрова, М. Николаева мастерсем нормăна икшер хут иртерсе тултараççĕ. Завод сăра, квас тумалли çулталăкри плана 125 процент тултарчĕ. Сушка пĕçерекен С. Юманов юлташ III-мĕш кварталти задание 290 процент тултарнă. Çак уйăхра вăл 15 кун хушшинче пĕр уйăхри нормăна тултарнă.

— Ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пирĕн комбинат коллективĕ çулталăкри планран иртерсе 35 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларассишĕн кĕрешет,—тет апат-çимĕç комбиначĕн директорĕ А. Федорова юлташ.

Промкомбинатăн мĕнпур цехĕсемпе мастерскойĕсем вунă уйăхра продукци туса кăлармалли плана тултарнă. Урапа-çуна тăвакан цехри М. Илюхин, Е. Александров, Д. Морозов мастерсен çулталăкра 200 стан урапа туса кăлармалла пулсан, 9 уйăх та 15 кун хушшинче 175 стан туса хатĕрленĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех (начальникĕ П. Александров юлташ) çак кунсенче çулталăк планне тултарчĕ. Цехри А. Алексеева, К. Казакова, В. Плешкова тата ытти çĕвĕçсем куллен икшер норма тултараççĕ. Уяв умĕнхи ăмăртура мала тухнăшăн вуншар работниксен ячĕсене комбинатри Хисеп хăми çине çырса хунă.

МТС-па колхозсенче те уяв умĕнхи социализмла ăмăрту анлăн саралса пырать. Ленин ячĕпе тăракан, «Победа», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлесе пыраççĕ. Вĕсем районта чи малтан авăн çапса пĕтерчĕç, çĕрулмипе тымарçимĕçсене кăларса пĕтерчĕç, вăрлăхпа фураж фончĕсене хывса çитерчĕç, государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене срокчен тултарчĕç, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитрĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

ЙĔПРЕÇ

Чугун çул станцийĕ. Поезд кăнтăрла тиенĕ вагонсенчен тем тăршшĕ состав туса илсе каять.

— Ку составпа Донбасри шахтăсене çирĕплетме каякан йывăçсене эпир тиерĕмĕр.

— Мускаври çӳлĕ çурт тунă çĕрсе каякан юмана эпĕ турттарса кăларнă.

— Сава турпассине пирĕн цехра хатĕрленĕ,—калаççĕ поездсем çӳренине пăхса тăракан çамрăксем.

Хулари е ялти аптекăна кĕрсе пăхăрха. Унта кĕрсен тĕрлĕрен эмельсем тултарнă ачаш кĕленчесене ванасран кăпăшка турпаспа чĕркенине куратăр. Апат-çимĕç сутакан магазинсенче повидлăпа варенин пичкисемпе каткисем, консерва банкисем тултарнă ещĕксем куратăр. Катка-пичке тумалли йывăçа Йĕпреçри предприятисем туса ăсатнă. Хăвăрăн килĕрти матрац, сĕтел-пукан т. ыт. чылай япаласем çине пусnă штампа пăхсан та эсир Йĕпреçри предприятисен ятне вулама пултаратăр.

Йĕпреç поселокĕнче вунвиçĕ предприяти ĕçлет. Вĕсем хĕрĕх тĕрлĕ продукци туса кăларса, Тăван çĕршывăн пур кĕтессисене те ăсатаççĕ. Мускаври университетăн урайне Йĕпреçрен янă юман хăма сарнă. Атăлпа Дон хушшинчи канала тунă чухне телефон юписене Йĕпреçри вăрманпромхоз ярса панă пĕренесенчен лартнă. Кунтан ярса панă юманпа хурăнран фабрикăсем питĕ лайăх фанерăсем туса кăлараççĕ.

Революциччен Йĕпреç станцинче пĕчĕк складсемсĕр пуçне нимĕнле предприятисем те пулман.

Чăваш облаçне тунă хыççăн, Йĕпреç пĕр вăхăт Патăрьел уесчĕн центрĕ пулнă. 1927-мĕш çултанпа—район центрĕ. Пилĕкçуллăхсем пуçлансан, вăл хытă ӳсме тытăнать. Станцин çурçĕр енче кашни çул çĕнĕ урамсем тăвă-тăва лартнă. Предприятисем йышланса пынă май, 1935-мĕш çулта Йĕпреç станцине рабочи поселокĕн шутне кĕртнĕ. Халĕ унти предприятисем кашни çул аллă миллион тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ. Поселокра пиншер çын пурăнать.

Йĕпреçри предприятисем, тĕпрен илсен, вăрман промышленноçĕпе çыхăннă. Вăрçă хыççăн вĕсем пурте пирĕн вăхăтри чи хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă. Вăрмана пĕтĕмпех электропăчкăсемпе касаççĕ, тракторпа турттарса кăлараççĕ, автомашинăпа турттараççĕ. Чугун çул хĕррине кăларсан, ăна конвейер сортласа уйăрать, вагон çине автоэлектрокранпа тиеççĕ. Хăма çурнă, шпал хатĕрленĕ çĕрте те техника ĕçлет. Вăрман хатĕрлесси индустриллĕ ĕç пулса тăчĕ. Техника ӳснĕ май, ăна юсамалли мастерскойсем туса лартнă.

Пĕлтĕр кирпĕч çапакан «Красный строитель» артелĕн вăй парса тăракан двигательне çĕнĕрен лартнă. Çитес кунсенче артель кирпĕч хĕртмелли вунтăватă номерлĕ кăмака туса пĕтерсе, кашни çул 3 миллион кирпĕч туса кăларма пуçлать. «Кооплеспром» артель авмалли мастерской хута ярсан, республикăри колхозсемпе организацисене çуна тупанĕ, урапа станĕ, пĕкĕ т. ыт. япаласем те нумай туса сутма тытăнать.

Предприятисем вăйланса ытларах продукци туса кăларнă, рабочисен йышĕ нумайланнă май, поселокри коммунальнăй хуçалăх та ӳссех пырать. Урамсене чул, тротуар сарса лайăхлатаççĕ, йывăçсем лартса илемлетеççĕ. Кашни хваттере тенĕ пекех радио кĕртнĕ. Обществăлла мунчасем иккĕ тунă. Чугун çул çинче рабочисем валли икĕ хутлă, нумай хваттерлĕ чул çурт иккĕ лартнă тата тепре тума тытăннă. Харпăр хăйĕн вăйĕпе çурт лартасси те вăйлансах пырать.

Поселокра вырнаçнă МТС районти колхозсене организаципе хуçалăх енчен çирĕплетме, вăйлă тырпул ӳстерме, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме, строительство ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Йĕпреç культурăллă центр пулса тăчĕ. Поселокра виçĕ шкул вырнаçнă. Вĕсенче 1.600 ача вĕренет, 19 учитель ĕçлет. Ача-пăча учрежденийĕсен ĕçĕ аванлансах пырать. Библиотекăсенчен 3 пин çын ытла кĕнеке илсе вулать. Рабочисемпе служащисем кашни кунах кино күраççĕ. Чăваш академи театрĕн артисчĕсем лартакан постановкăсене, юрăпа ташă ансамблĕ, филармони концерчĕсене кураççĕ. Поселокра чăваш тата вырăс чĕлхипе районти хаçат тухса тăрать.

Поселокра райсоюз, вăрманпромхозăн ОРС-ĕ суту-илӳ тăвать. Иртнĕ уйăхсенче çĕнĕ чайнăйсемпе столовăйсем, ларексем уçнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: 1. Йĕпреçри вокзальнăй урамра; 2. Ачасен çуртĕ, Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕсем.

Совет влаçĕ çулĕсенче халăх сывлăхне сыхласси танлаштармалла мар ӳснĕ. Больницăпа амбулаторисенче 20 врач ĕçлет. Больницăри койкăсен шучĕ нумайланать. Çак çулсене амбулаторире рентген, электричество сутипе эмелемелли кабинетсем уçнă.

П. ЩИПЦОВ.
(Хамăр корр.)

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

КПСС райкомӗсен пленумӗсем

Тӑвай

Октябрӗн 16-мӗшӗнче КПСС Тӑвай райкомӗн пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ялхуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе районти парти организацийӗ умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен сӳтсе явӗ. Райком секретарӗ Иванов юлташ хӑйӗн докладӗнче КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановлени пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе районти парторганизаци умне мӗнле задачӑсем тухса тӑни ҫинчен каласа пачӗ.

Партипе правительство пулӑшнипе юлашки ҫулсенче колхозсене ҫирӗплетес тӗлӗшпе районта чылай ӗҫсем туса ирттернӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче юхӑннӑ колхозсем ура ҫине тӑнӑ, обществӑлла хуҫалӑх ҫирӗпленсе пырать. Ҫавах та районта ялхуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫре ҫитменлӗхсем питех те нумай. Ҫавна пула чылай колхозсем хуҫалӑхран сахал тупӑш илеҫҫӗ, тырпулпа обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ ытла та пӗчӗк.

Ялхуҫалӑхне малалла аталантарма парти палӑртнӑ мерӑсем хушшинче выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе лайӑхлатасси чи малти вырӑнта тӑрать. Ҫав отрасль енӗпе Тӑвай районӗнчи парти организацийӗсен питӗ пысӑк ӗҫсем туса ирттермелле пулать, мӗншӗн тесен выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ паян куна районта чӑтма ҫук юлса пырать. Партипе правительство кӑтартса панӑ тӑрӑх, ӗне ферминче сӑвакан ӗнесен шучӗ 50 процентран кая мар пулма кирлӗ, сӗт тухӑҫлӑхӗ кашни ӗнерен ҫитес ҫултах 1.400-шер литр пулмалла. Тӑвай районӗнчи колхозсенче ӗнесем халӗ питӗ сахал, сӗт суса илесси 700 литра та ҫитмест.

Хӑшпӗр колхозсенчи ӗне фермисене халӗ ӗне ферми теме ҫук,—ӗне ферминчен вӑкӑр ферми пулса тӑнӑ. Тӗслӗхрен, «Горьковская Коммуна» колхозра пӗр ӗне пуҫне икӗ вӑкӑр усраҫҫӗ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ферминче сӑвакан пӗр ӗне пуҫне тӑватӑ вӑкӑр тивет. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра сӑвакан 9 ӗнешӗн 40 вӑкӑр усраҫҫӗ. Ҫавӑн пек «вӑкӑр фермисенчен», паллах, пысӑк тупӑш илесси ҫинчен калаҫмалли те ҫук. Ҫавӑнпа та районта колхозсем илекен тупӑшран выльӑх-чӗрлӗхрен илнӗ тупӑш 27 процент ҫеҫ шутланать. Колхозсенче питӗ нумай вӑкӑр усраҫҫӗ пулин те, 1953 ҫулта районӗпе 440 ӗне хӗсӗр юлнӑ.

Выльӑх-чӗрлӗхрен тухӑҫ илесси апатран килет. Выльӑх апачӗ хатӗрлес тӗлӗшпе чылай колхозсенче питех тӑрӑшмаҫҫӗ. Район силос хатӗрлемелли плана ҫултан-ҫул тултармасть. Силос хывмалли 1953 ҫулхи плана тултарас пулсан, районта татах 2 пин тонна ытла силос хывмалла. Выльӑх апачӗ тума акнӑ культурӑсен тухӑҫлӑхӗ калама ҫук пӗчӗк. Сӑмахран, Горкий ячӗпе тӑракан колхозра иртнӗ ҫулта гектартан мӗн пурӗ те 10-шар центнер ҫеҫ кӑшман пухса илнӗ. Хрущев ячӗпе тата Киров ячӗпе тӑракан колхозсенче те ҫавӑн пекех. Чапаев ячӗпе тӑракан колхозра вара лартнӑ кӑшмана пулман тесе каларма та тухман.

Выльӑх витисем колхозсенче начар. Ҫапла пулин те 1953 ҫулта та строительство ӗҫӗ япӑх пырать, ӗне вити тумалли плана паян куна мӗн пурӗ те 11,6 процент ҫеҫ тултарнӑ (районӗпе икӗ вите ҫеҫ тунӑ).

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ «Ялхуҫалӑхне малалла аталантармалли мерӑсем ҫинчен» постановлени йышӑнпӑ хыҫҫӑн районта колхозниксем хушшинче харпӑр хӑй валли выльӑх туянасси вӑйланни сисӗнет. Ҫавах хӑшпӗр колхозсенче ӗнесӗр е ытти выльӑхсӑр колхозниксем халӗ те нумай-ха.

Районта агротехникӑна хакламаҫҫӗ. Тӗштырӑ тата уй-хирте акакан ытти культурӑсен тухӑҫлӑхӗ ҫахал пулни чи малтанах ҫавӑнтан килет. Иртнӗ ҫул уя районӗпе мӗн пурӗ те 190 тонна ҫеҫ минераллӑ удобрени кӑларнӑ. 1953 ҫулта унтан та сахалрах. Тислӗк те уя питӗ сахал тухать. Кунта агротехникӑна хисеплеменни ҫакӑнтан та курӑнать: районти хӑшпӗр колхозсенче ыраш калчи ҫинче кунӗн-ҫӗрӗн выльӑх ҫӳрет. Районта сортлӑ вӑрлӑха хакламанни те пур.

Пленумра тухса каланисенчен ҫакӑ паларчӗ: районта фермӑсенчи ӗҫсене механизацилесси юлса пырать.

Районта техникӑлла культурӑсенчен кантӑр тӗп вырӑнта тӑрать. Кантӑр кунта нумай акса тӑваҫҫӗ. Анчах кантӑр ҫурӑмӗсене хутса типӗтнӗ хыҫҫӑнхи ӗҫсене механизацилемен пирки, чылай ҫӗрте вӑл ахалех пӗтет. Республикӑри пӗртен-пӗр Элӗк заводне илсе кайма инҫе. Ҫавӑнпа та районти колхозсем валли кантӑр тылламалли механизмсем ытларах кирлӗ пулаҫҫӗ. Республикӑри тивӗҫлӗ организацисен республика территорийӗнче кӑнтӑрти районсем валли тепӗр сӳс-кантӑр завочӗ лартмалла тӑвас тӗлӗшпе ҫине тӑрсах тӑрӑшма кирли курӑнать.

Пленум ҫакна кӑтартрӗ: хӑшпӗр колхоз руководителӗсемпе парторганизаци секретарӗсем Центральнӑй Комитетӑн сентябрьти Пленумӗ йышӑннӑ постановленирен тухса тӑракан задачӑсене халӗ те тӗплӗн ӑнланса ҫитеймен. Ҫавӑн пирки районта кӑҫалхи ялхуҫалӑх ҫулне вӗҫлесси вӑрӑма пырать. Пленум ҫакна та кӑтартрӗ: КПСС райкомӗпе райсовет исполкомӗн ялхуҫалӑхне малашне лайӑхрах та конкретлӑрах ертсе пыма кирлӗ.

(Хамӑр корр.).

Чурачӑк

Парти райкомӗн черетлӗ пленумӗнче докладчик райком секретарӗ К. Павлов тата прениre тухса каланӑ юлташсем районти МТС-па колхозсем ҫӗр культурине хӑпартас, обществӑлла хуҫалӑх отраслӗсене малалла аталантарас ӗҫре хӑшпӗр ӳсӗмсем пуррине палӑртрӗҫ. Кӑҫал район уй-хир ӗҫӗсене, иртнӗ ҫулхисемпе танлаштарсан, кӗскерех срокенче вӗҫленӗ.

Пленум МТС-па колхозсен ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене те палӑртрӗ. Район уйрӑмах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе чӑтма ҫук кайра пырать. Нумай артельсенче выльӑх апачӗ хатӗрлеме ҫине тӑрса тӑрӑшмаҫҫӗ. Фермӑсенче ӑма выльӑхсем сахал усранӑ пирки колхозсем выльӑх-чӗрлӗх шутне хӑвӑрт ӳстереймеҫҫӗ.

Райкомпа райисполком колхозсемпе МТС-а ертсе пырас ӗҫри формализма пӗтермен, колхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсем мӗнле пынине конкретлӑ, куллен пӗлсе тӑмаҫҫӗ.

Выльӑх апачӗ акнӑ культурӑсене пухса кӗртес, силос хывас, выльӑх-чӗрлӗх валли ҫӗнӗ витесем тӑвас, киввисене юсаса хӗле хатӗрлес ӗҫсем, районӗпе илсен, ӑнӑҫлӑ пынӑ пек курӑнать. Анчах хӑйсен обществӑлла хуҫалӑхне аталантарас тӗлӗшпе нимех те туман колхозсем чылай-ха.

Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ ӳсменнин тӗп сӑлтавӗ—сӗтеклӗ апатсем тата концентратсем ҫитменни. Сӗтеклӗ апатсем ҫителӗклӗ хатӗрлеме районта пысӑк майсем пур, анчах вӗсемпе туллин усӑ курмаҫҫӗ. «Путь Сталина» колхозра, выльӑх апачӗ нумай ҫитмест пулин те, кӑҫал пӗр тонна та силос хывман. Высоково ял Советӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан, Ленин ячӗпе тӑракан, «Броневик» колхозсен правленийӗсемпе пуҫламӑш парторганизацисем обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе хуҫалӑхӑн пысӑк тупӑшлӑ отраслӗ туса хурассишӗн кӗрешмеҫҫӗ.

Пленумра тухса калакансем МТС ӗҫне хыттӑн критиклерӗҫ. МТС хӑйӗн ҫулталӑкри производство планне, пӗтӗмӗшпе илсен, октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне тултарнӑ. Анчах вӑл колхозсемпе тунӑ договорсене тӳррӗн пурнӑҫлама, уй-хир ӗҫӗсене вӑхӑтра туса ирттерме ҫителӗксӗр тӑрӑшать, выльӑх апачӗ хатӗрлес, ҫӗрулмипе тымарҫимӗҫсем, техникӑлла культурӑсем акса тӑвас ӗҫе сахал хутшӑнать.

МТС-ра пысӑк строительство пырать. Механизациленӗ мастерской ҫуртне тума кӑна государство укҫа-тенкӗ нумай уйӑрса панӑ. Анчах строительство ӗҫӗсене кунта ҫителӗксӗр организациленӗ.

КПСС райкомӗ колхозсенче политикӑлла-массӑлла ӗҫе вӑйлатас тӗлӗшпе халӗ те ҫителӗксӗр ӗҫлет-ха, пуҫламӑш парторганизацисемпе колхоз правленийӗсен ертсе пырас ӑсталӑхне пур майпа та ӳстерес вырӑнне вӗсене вак-тӗвек пулӑшу пама уполномоченнӑйсем ярса тӑрас практика тӗп вырӑн йышӑнать. КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене тата партипе правительство ялхуҫалӑхӗн чи кирлӗ отраслӗсене аталантармалли мерӑсем ҫинчен йышӑннӑ постановленисене колхозниксемпе механизаторсене ӑнлантарса парас ӗҫе чылай пуҫламӑш парторганизацисенче тивӗҫлипе пуҫарса яман.

Райком пленумӗ КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн решенийӗсене пӗр кӑмӑллӑ пулса ырларӗ, ҫав решенисене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе районти парторганизацинче туса ирттермелли ӗҫсене палӑртрӗ.

Н. ВОЛКОВ,
(Хамӑр корр.).

Калинино

КПСС райкомӗн пленумӗ районти колхозсенчи выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри ҫитменлӗхсене уйрӑмах палӑртать. Выльӑх-чӗрлӗхрен тупӑш илесси уйрӑмах ҫителӗксӗр пулса пырать. Ҫакӑ вӑл, пуринчен малтан, выльӑх апачӗ хатӗрлес ӗҫе начар йӗркеленинчен килнӗ. Октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне районӗпе утӑ-улӑм 42 процент, сӗтеклӗ апатсем 36 процент ытларах ҫеҫ хатӗрленӗ, пӗрчӗллӗ тырӑ пачах уйӑрса хуман.

Ҫаран ути туса илесси те начар пулса пырать. Районти колхозсем ҫулсерен 2.608 гектар ҫинчен утӑ ҫулаҫҫӗ. Кашни гектартан 22,5-шер центнер таран ҫеҫ утӑ тухать. Апла пулин те районта ҫарансене лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ.

Районта 27 колхозран 12-шӗ кӑна силос хывмалли плана тултарнӑ. Уйрӑм колхозсем кашни ӗне пуҫне 1—2-шер тонна ҫеҫ силос хывса хӑварнӑ.

Район выльӑх-чӗрлӗх ҫурчӗсем тумалли плана 43—71 процент ҫеҫ тултарнӑ. Анчах та ҫак ҫитменлӗхе пӗтерес тӗлӗшпе районти организацисем колхозсене тивӗҫлипе пулӑшмаҫҫӗ.

Пренире колхоз председателӗсем Ефремовпа Воробьев юлташсем суту-илӳ организацийӗсен руководителӗсене строительство материалӗсем ҫителӗксӗр илсе килнӗшӗн, МТС руководителӗсене ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӑхӑтра пурнӑҫласа пыманшӑн, фермӑсенчи йывӑр ӗҫсене механизацилеме ҫителӗксӗр пулӑшнӑшӑн критиклерӗҫ.

Пленум ялхуҫалӑхне малалла аталантарас ӗҫре районти парторганизаци умӗнче тӑракан задачӑсене палӑртрӗ, ялхуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑхлатмалли майсене кӑтартса решени йышӑнчӗ.

М. ВАСИЛЬЕВ.
(Хамӑр корр.).

Первомайски

КПСС райкомӗн секретарӗ Кураков юлташ «КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн итогӗсем тата ялхуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе районти парторганизаци умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен» тунӑ доклада сӳтсе явса, райком пленумӗ районти хӑшпӗр колхозсем партин XIX-мӗш съездӗн решенийӗсене пурнӑҫлас, ялхуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсене палӑртрӗ. «Красная поляна», «Пионер», Карл Маркс ячӗпе, Маленков ячӗпе, Шверник ячӗпе тӑракан колхозсем тӗштырӑсен тата ытти культурӑсен тухӑҫлӑхне ҫулсерен ӳстерсе пыраҫҫӗ.

Кунпа пӗрлех районти ялхуҫалӑхне ертсе пырас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Докладчик тата тухса калакансем КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн постановленийӗнче кӑтартнӑ ҫитменлӗхсем уйрӑмах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре пуррине кӑтартса пачӗҫ. Район майракаллӑ шултра выльӑхсем ӗрчетессипе юлса пырать. Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхӗ те пӗчӗк. 1952 ҫулта колхозсем кашни ӗнерен, вӑтам шутпа, 737-шер килограмм, кӑҫалхи 9 уйӑх хушшинче 702-шер килограмм ҫеҫ сӗт суса илнӗ.

Районти колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе юлса пыни выльӑх апачӗ хатӗрлес, выльӑхсем валли ҫуртсем тӑвас ӗҫсене парти организацийӗсем енчен ҫителӗксӗр ертсе пынинчен килнӗ. Районти 23 колхозран пиллӗкӗшӗ кӑна силос хывмалли плана тултарнӑ. Чылай колхозсенче тымарҫимӗҫсемпе силос культурисен тухӑҫлӑхӗ начар. Район октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне ӗне, сурӑх, сысна витисем тумалли плана ҫуррине те тултарман. Хӑшпӗр колхозсен фермисенче нумай выльӑхсем хӗсӗр юлаҫҫӗ. Ленин ячӗпе тӑракан, «Красный флот» колхозсенче фермӑри ӗнесен 60—65 процентне чуптармасӑр хӑварнӑ.

Пленум районти колхозсем тӗштырӑсемпе техникӑлла культурӑсем, ҫӗрулмипе пахча ҫимӗҫсем туса илессипе те юлса пынине палӑртрӗ. Чылай колхозсенче пахча ҫимӗҫсем лартса тӑвас енӗпе пачах та ӗҫлемеҫҫӗ. Парниксемпе теплицӑсем пӗр колхозра та туман.

Доклад тӑрӑх пленумра 16 ҫын тухса каларӗ.

И. Антонов агроном колхозсем вырӑнти тата минераллӑ удобренисемпе ҫӗре ҫемҫетес ӗҫре сахал усӑ курнине палӑртрӗ. Районта 4—5 колхозра кӑна минераллӑ удобренисемпе усӑ кураҫҫӗ.

Г. Владимиров, О. Шакова, А. Маназыпов, Г. Савинов юлташсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗ йышӑннӑ постановление пропагандӑлас ӗҫ районта ҫителӗксӗр пулса пынине палӑртрӗҫ, ӗҫҫыннисем хушшинче политикӑлла-массӑлла ӗҫе татӑклӑнах вӑйлатма кирли ҫинчен каларӗҫ.

А. ТУКМАКОВ.

Хаҫатсене пӑхса тухни

Суту-илӳ ыйтӑвӗнчен пӑрӑнмалла мар

Нумаях пулмасть «Хӗрлӗ Октябрь» хаҫат (Октябрьски район) «Суту-илӳ ӗҫне вӑйлатмалла» ятлӑ статья пичетлесе кӑларчӗ. Статьяна тӗплӗ ҫырнӑ. Совет суту-илӗвӗ районта мӗнле пынине автор лайӑх пӗлет. Суту-илӳ ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсен сӑлтавӗсене вӑл фактсемпе кӑтартса парать. Районти суту-илӳ организацийӗсем лайӑх таварсем кӳрсе килме тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫавӑн пирки вара таварсем сутӑнмасӑр выртаҫҫӗ. Халӑх ытларах ыйтакан таварсене района сахал кӳрсе килеҫҫӗ. Ҫавсене пула районти суту-илӳ организацийӗсем тавар ҫаврӑнӑш планне тултараймаҫҫӗ.

Статьяра малалла совет суту-илӗвӗн принципӗсене пӑсни ҫинчен калакан фактсене илсе кӑтартнӑ. Халӑх ытларах ыйтакан таварсене суту-илӳ работникӗсем хӑйсем илсе е вӑрттӑн сутса пӗтереҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех районти столовӑйсемпе чайнӑйсенче те йӗркесӗрлӗхсем пур. Райпотребсоюз чайнӑйӗнче яланах пӗр йышши апатсем. Ҫитменнине тата официанткӑсем ҫаврӑнӑҫусӑр ӗҫленине пула апатланакана нумай вӑхӑт кӗтсе ларма тивет.

Ҫӗрпӳ районӗнчи «Сталинец» хаҫат та суту-илӳ ыйтӑвне тивӗҫлӗ вырӑна лартать. Сентябрӗн 27-мӗшӗнче тухнӑ номерте суту-илӳ ыйтӑвӗ тӗлӗшпе ятарласа ҫырнӑ умстатья тата икӗ заметка пичетленӗ.

Совет суту-илӗвӗ—пирӗн тӑван, пӗтӗм халӑх ӗҫӗ. Халлӗхе вӑл халӑх пурнӑҫне лайӑхлатса пырас ӗҫре пысӑк вырӑнта тӑрать. Ҫавӑнпа та Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви совет суту-илӗвне анлӑлатассишӗн пӗрмай тӑрӑшаҫҫӗ, ҫӑмӑл промышленноҫпа апат-ҫимӗҫ промышленноҫне хӑвӑртрах аталантарса, халӑха кирлӗ таварсене ытларах туса кӑларма пӗтӗм вӑя пара ҫҫӗ. Совет суту-илӗвне лайӑхлатассишӗн кӗрешни вӑл халӑх ырлӑхӗшӗн тӑрӑшни пулать.

Хаҫатсем—обществӑлла шухӑш-кӑмӑла организацилекенсем. Вӗсем политикӑлла тата хуҫалӑхла ыйтусене пурне те ҫутатса тӑма тивӗҫлӗ. Вӗсем совет суту-илӗвне лайӑхлатассишӗн те пӗрмай кӗрешмелле. Анчах та районти чылай хаҫатсем суту-илӳ ыйтӑвне халӗ те сахал хускатаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Шӑхасан районӗнчи «Вӑйлӑ тырпулшӑн» хаҫат кӑҫал ун пирки пӗр заметка та пичетлемерӗ. Йӗпреҫ районӗнчи «Коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн» хаҫат та райсовет исполкомӗн суту-илӳ пайӗн заведующийӗ ҫырнӑ пӗртен-пӗр статья ҫеҫ пичетлерӗ кӑҫал.

Ҫав вӑхӑтрах нумай районсенчи суту-илӳ организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Хӑшпӗр ҫӗрте ялти магазинсемпе лавккасене вӑхӑтра уҫмаҫҫӗ, хӑҫан май килнӗ, ҫавӑн чухне ҫеҫ уҫаҫҫӗ. Час-часах хӑшпӗр лавккасенче куллен кирлӗ пулакан таварсене тупма ҫук, ҫав вӑхӑтрах кӳршӗри ялти лавккара вӗсем тем чухлех. Тавар илме пыракансемпе суту-илӳ работникӗсем ӑшшӑн мар, сиввӗн калаҫса вӗсене кӳрентерисем те пулкалаҫҫӗ. Хӑшпӗр магазинсемпе лавккасенче жалоба кӗнеки ҫук, е пулсан та суту-илӳ ӗҫне ертсе пыракансем ӑна вуласа, ҫитменлӗхсене пӗтерме кирлӗ пек тӑрӑшмаҫҫӗ.

Паллах, ҫавӑн пек ҫитменлӗхсене малашне тӳсме ҫук. Районти хаҫатсем суту-илӳ ӗҫӗ ҫинчен тӗплӗ пӗлсе ҫырса, хӑйсен витӗмлӗ сӑмахӗсемпе районта суту-илӳ ӗҫне лайӑхлатса пыма пулӑшмалла.

Калас пулать, суту-илӳ ӗҫӗ ҫинчен час-часах ҫыракан хаҫатсем те чылайӑшӗ хӑйсен тӗллевне вӗҫне ҫитерейменҫҫӗ. Шӑмӑршӑ районӗнчи «Сталин ялавӗпе» хаҫатра пичетленӗ материалсем тӑрӑх кунта суту-илӳ ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсемпе йӗркесӗрлӗхсем питех те нумай пулни курӑнать. Мартӑн 29-мӗшӗнче хаҫат Карабай Шӑмӑршӑри магазинра ӗҫлекен Семенов япӑх ӗҫлени ҫинчен ҫырать, майӑн 17-мӗшӗнче—магазин хупӑ тӑнине сивлет, июлӗн 18-мӗшӗнче—пасар урамӗнче йӗркелӗх ҫукки ҫинчен, июлӗн 19-мӗшӗнче «Иртӗхсе кайнӑ продавец» ҫинчен пӗлтерет.

Ҫапла вара, ҫитменлӗхсемпе йӗркесӗрлӗхсем купипех. Хаҫат вӗсем ҫинчен ҫырса «пӗлтерет» ҫеҫ, хӑй пичетленӗ материалсен витӗмлӗхӗшӗн кӗрешмест, пичетленӗ материалсем тӑрӑх мӗнле мерӑсем йышӑнни ҫинчен вулакансем пӗлмеҫҫӗ. Суту-илӳ ӗҫӗ ҫинчен ҫырни ячӗ пултӑр тесе ҫеҫ ҫырнӑ пек пулса юлать. Ӗҫ ҫине ҫавӑн пек пӑхнине пирӗн парти сивлет. Совет суту-илӳ ыйтӑвӗ ҫинчен ҫырнинче нихҫанхинчен ытларах витӗмлӗх пулмалла.

Суту-илӳ ӗҫӗнчи кадрсемпе ӗҫлесси халӗ питӗ кирлӗ ыйту пулса тӑрать, мӗншӗн тесен ӗҫе лайӑхлатасси чи малтанах кадрсенчен килет. Ҫапла пулин те хӑшпӗр районсенче суту-илӳ ӗҫне ертсе пыракансем кадрсемпе ҫителӗксӗр ӗҫлени курӑнать. Ӗҫри йӗркесӗрлӗхсем, растратӑсемпе сухатусем чи малтанах кадрсемпе ӗҫлемен пирки пулаҫҫӗ. Районти хаҫатсен ҫавӑн пек ыйтусенчен те пӑрӑнмалла мар.

Суту-илӳ работникӗсем хушшинче лайӑх, тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлекенсем нумай. Хаҫатсем вӗсен ӗҫӗсем ҫинчен ҫырса, лайӑх опыта сарма тӑрӑшмалла. Ҫавӑн пек статьясем халӗ хаҫатсенче ҫукпа пӗрех.

Пирӗн ҫӗршывра суту-илӳ питӗ пысӑк вырӑн йышӑнать. Суту-илӳ ыйтӑвӗ производство ыйтӑвӗпе танах тӑрать. Суту-илӳ ыйтӑвӗнчен хаҫатсем нимӗн чухлӗ те пӑрӑнма пултараймаҫҫӗ.

„Коммунизм ялавӗ" хаҫатра ҫырнӑ хыҫҫӑн

«ЧЕЕ ҪЫННӐН КУШАКӖ ТЕ ПУЛӐ ТЫТАТЬ»

Сентябрӗн 13-мӗшӗнче «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра пичетленнӗ «Чее ҫыннӑн кушакӗ те пулӑ тытать» ятлӑ фельетонра Чкаловски райпотребсоюзӗн склад заведующийӗ С. Шуряшкин, промышленность таварӗсем сутакан магазинри продавщица А. Кошкина тата райпотребсоюзӑн суту-илӳ пайӗн заведующийӗ П. Медведева, виҫҫӗшӗ пӗр каварлӑ пулса, хӑшпӗр таварсен хакӗсене ӳстерсе сутнине, ҫакна май сахал мар укҫа хӑйсем ҫумне чикнине, пахарах таварсене складранах салатса пӗтернине кӑтартса панӑччӗ.

Чкаловски районӗн прокурорӗ фельетонри фактсем пӗтӗмпех тӗрӗс пулни, П. Медведевӑна, С. Шуряшкина тата А. Кошкинӑна тавар илевсене улталанӑшӑн суд урлӑ ответ тыттармалла туни ҫинчен пӗлтерчӗ.

«ҪИТМЕНЛӖХСЕНЕ ҪИЙӖНЧЕХ ПӖТЕРМЕЛЛЕ»

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатра октябрӗн 7-мӗшӗнче «Ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтермелле» ятлӑ статья пичетленнӗччӗ. Статьяра Ҫӗрпӳ районӗнчи хӑшпӗр организацисемпе колхозсенчи политшкулсемпе кружоксенче занятисем вӑхӑтра пуҫланайманнине, хӑшпӗр пропагандистсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене кӑтартса панӑччӗ.

КПСС Ҫӗрпӳ райкомӗ парти вӗренӗвӗнчи малтанхи занятисен итогӗсене октябрӗн 6-мӗшӗнче КПСС райком бюровӗн ларӑвӗнче сӳтсе явни, кружоксемпе политшкулсен ӗҫне лайӑхлатма тивӗҫлӗ решени йышӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Чӑваш чӗлхин хӑшпӗр кӑткӑс ыйтӑвӗсем

«Коммунизм ялавӗ» хаҫатра чӑваш чӗлхин ыйтӑвӗсене ҫутатса панине чӗлхеҫӗсем те, учительсем те интересленсе сӑнаса пыраҫҫӗ.

Статьясен авторӗсем пуринчен ытла падежсем ҫинчен сӑмахлаҫҫӗ. Статьясене пӑхса тухсан, тӳрех ҫакна каламалла: авторсенчен кашниех падеж мӗн иккенне хӑйне май ӑнланать пулас.

Паллах, кирек мӗнле чӗлхере те миҫе падеж тата мӗнле падежсем пулнине татса парас тесен, малтан падеж мӗн иккенне аван пӗлсе пулать. Ҫак грамматикӑлла категорин пӗлтерӗшне пурте пӗр пек ӑнланмасан, падежсене тата вӗсен хисепне тупма ҫӑмӑлах пулмӗ.

Мӗн-ха вӑл падеж? Ку ыйту тӑрӑх вырӑссен паллӑ чӗлхеҫисем те сахал мар ҫырнӑ ӗнтӗ. Вӗсенчен хӑшпӗрисем вырӑс чӗлхинче миҫе падеж пулнине калама йывӑррине те палӑртнӑ. Тӗслӗхрен, А. И. Соболевский академик хӑйӗн «Русский исторический синтаксис» кӗнекинче ҫапла ҫырнӑ: «Сколько падежей? Ответ на этот вопрос не только труден, но прямо невозможен»... (В. В. Виноградовӑн «Русский язык» кӗнеки тӑрӑх, 1947 ҫул, 169 стр.). Хальхи вӑхӑтра вырӑс чӗлхи ҫинчен ҫырнӑ учебниксенче, научнӑй литературӑра чӗлхеҫӗсенчен нумайӑшӗ падеж мӗн иккенне ҫакӑн пек ҫутатса панипе килӗшеҫҫӗ: падеж—вӗҫленекен пуплев пайӗсен предложенири ытти сӑмахсемпе мӗнле ҫыхӑнса тӑнине пӗлтерекен форми. В. В. Виноградов академик падеж категорине ҫакӑн пек определени парать: «Падеж—это форма имени, выражающая его отношение к другим словам в речи» («Русский язык», 1947 ҫул, 167 стр.). «Чӑваш чӗлхин грамматикинче» те (М. Сергеев, А. Васильев, А. Иванов т. ыт. те) падежсем ҫинчен ҫавӑн пекех ҫырнӑ.

Ҫӳлте каланисем хыҫҫӑн ҫакӑ паллӑ: чӗлхере мӗнле падежсем пуррине, падежсен хисепне тупас пулсан, вӗҫленекен сӑмахсем ҫине уйрӑммӑн илсе мар, вӗсем предложенири ытти сӑмахсемпе мӗнле ҫыхӑнса тӑнине пӑхас пулать.

1. Тӗп падеж ҫинчен. А. Иванов, В. Антонов, С. Юшков юлташсем ят, аффиксӑр камӑнлӑх тата аффиксӑр тӑву падежӗсене пӗрлештерсе пӗр падеж—тӗп падеж тӑвасшӑн. Эпир ҫак шухӑшпа килӗшетпӗр.

Чӑнах та, форми енчен те, ытти сӑмахсемпе ҫыхӑнса тӑни енчен те вӗсем пӗрешкел. Илер тӗслӗхсем: «Пирӗн шкул ҫулран-ҫул хӑйӗн ӗҫне аванлатса пырать», «Шкул ҫуртӗнче пуху пулчӗ», «Кӑҫал ҫӗнӗ шкул турӗҫ».

Ку предложенисенчен ҫак сӑмах ҫыхӑнӑвӗсене илер: шкул—аванлатса пырать; шкул—ҫуртӗнче; шкул—турӗҫ. Виҫӗ ҫыхӑнӑвӗнче те «шкул» сӑмахӑн ыйтӑвӗ пӗрех-мӗн. «Аванлатса пырать», «ҫуртӗнче», «турӗҫ» сӑмахсем унӑн ыйтӑвне улӑштарма пултараймаҫҫӗ. Апла пулсан, ҫыхӑну енчен «ҫак мӑшӑрсем» уйрӑлса тӑмаҫҫӗ.

Паллах, аффиксӑр сӑмахсем предложенире тӗрлӗ член пулма пултараҫҫӗ (подлежащи, определени, дополнени). Ҫавӑнпа ӗнтӗ А. Горшков юлташ ҫиленсех ҫырать: «Вара ӑҫтан-ха, ҫак сӑмахсем пӗр падежра тӑма пултарччӑр?» «Совет организацийӗрӗҫ» предложенире «совет» сӑмах дополнени пулать, ҫавӑнпа вӑл уйрӑм падежра—тӑву падежӗнче тӑрать, тесшӗн пулас Горшков юлташ. Апла пулсан, унран ҫакна ыйтас килет: камсем тата хӑҫантанпа сӑмах мӗнле падежра тӑнине вӑл предложенире мӗнле член пулни тӑрӑх пӗлме пуҫланӑ?

«Эпӗ юлташа куртӑм». «Эпӗ юлташпа ӳсрӗм».

Горшков шухӑшӗсем тӑрӑх, «юлташа» тата «юлташпа» сӑмахсене пӗр падеж форми тес пулать ӗнтӗ, мӗншӗн тесен вӗсем иккӗш те дополнени пулса тӑраҫҫӗ. Малтан пӗрешкел формӑллӑ сӑмахсем мӗнле член пулнине пӗлмелле, кайран вара вӗсем мӗнле падежсенче тӑнине кӑтартмалла иккен. Кун пек шутласан, ят, камӑнлӑх тата тӑву падежӗсенчи пӗрешкел формӑллӑ сӑмахсене ҫеҫ мар; ят падежӗнчи сӑмахсене те, вӗсем те тӗрлӗ член пулма пултарнине шута илсе, тӗрлӗ падежсем ҫине сапаласа ярас пулать.

Ят падежӗнчи, камӑнлӑх тата тӑву падежӗнчи аффиксӑр сӑмахсем мӗншӗн пӗр пек формӑна ҫӳрени ҫинчен ӑнлантарнӑ чух Горшков юлташ пачах пӑтрашса кайнӑн туйӑнать: «Ку сӑмахсем хӑйсен формине тупма ӗлкӗреймен, ҫавӑнпа та вӗсем пуҫламӑш ят формипе ҫӳреҫҫӗ»,—тет вӑл. Кун пирки ҫакна ҫеҫ калас пулать: тӑхтӑпӑр, вӗсем чӗлхере хӑйсен уйрӑм формине тупчӑр, вара эпир вӗсене уйрӑм падеж ячӗсем парӑпӑр, халлӗхе тӗп падеж форми тесе калӑпӑр.

А. Горшков юлташӑн тӗслӗхнех илер. Авалах «шӑн-шӗн», «сӑр-сӗр» сӑмах пайӗсен хӑйсен пӗлтерӗшӗ пулнӑ пулсан, халӗ вӗсене чӑнах та падеж аффиксӗсем тесен тӗрӗсрех пулӗ, вӗсене тӗллев тата ҫуклӑх падеж формисем теме пултаратпӑр, тет. Анчах темшӗн Горшков юлташ «хӑйсен формине тупнӑ» «шӑн-шӗн», «сӑр-сӗр» пайлӑ сӑмахсене уйрӑм падеж ячӗсем пама вӑхӑт ҫитрӗ тесе шутланипе пӗрлех, «хӑйсен формине тупма ӗлкӗреймен» аффиксӑр сӑмахсене тӗрлӗ падежсем ҫине сапаласа ярасшӑн.

Тепӗр тӗслӗх. Вырӑс чӗлхинче чӗнӳ падежӗ пулнӑ (отче, старче). Унӑн форми ят падежӗн форминчен уйрӑлса тӑнӑ. Анчах чӗлхе аталаннӑ май ҫак икӗ падежӑн формисем пӗрешкелленсе кайнӑ, вара чӗнӳ падежӗ, ят падежӗпе хутшӑнса кайса, ҫухалнӑ. Пӗрешкел формӑллӑ сӑмахсене икӗ падеж ҫине пайлани кирлӗ пулман.

Ҫапла вара, ят, камӑнлӑх тата тӑву падежӗнчи аффиксӑр сӑмахсене пӗр падежа—тӗп падежа пӗрлештерни чӑваш чӗлхин законӗсене тӗрӗсрех ҫутатса парать, шкулта падеж формисене вӗренес ӗҫре те пулӑшать.

Тепӗр енчен, «чӑваш чӗлхине вӗренес ӗҫре чылай ҫӑмӑллӑхсем кӳме пулнишӗн» (В. Антонов статьинчен) ҫеҫ сӑмахсене пӗр падежа пӗрлештермелле тенипе килӗшме пулмасть. Кирек мӗнле чӗлхен законӗсене те наука енчен тӗрӗс ҫутатса парсан, вӗсене вӗренме йывӑр пулмӗ.

Тата ҫакна калас килет: ку пӗрлештернӗ падежа «тӗп падеж» мар, «ят падежех» тесен авантарах пулмӗ-ши? «Тӗп падеж» (основной падеж) тени ытти падежсенчи сӑмахсем ҫав падеж форминчен пулса кайнине кӑтартать. «Ят падежӗ» тесе калани «тӗп падеж» содержанине улӑштармасть, ҫав вӑхӑтрах вӗҫленекен сӑмахсен малтанхи формине кӑтартса тӑрать.

2. Тӗллев тата ҫуклӑх падежӗсем ҫинчен. Ку ыйту тӑрӑх эпир А. Ивановпа А. Горшков юлташсен шухӑшӗсем ҫумне нимӗн те хушмастпӑр.

Пурнӑҫра ҫуралнӑ е ҫӗнелнӗ япала хӑйӗн содержанине пӗлтерессӗн, тӑрӑшнипе яланах хӑйне валли ҫӗнӗ форма, уйрӑм форма шырать. Ку вӑл—марксизм-ленинизм вӗрентӗвӗн законӗсенчен пӗри.

Ҫак енчен илсен, «шӑн-шӗн», «сӑр-сӗр» пайлӑ сӑмахсем те хӑйсене уйрӑм падеж ячӗпе ҫӳреме тивӗҫ. В. Антонов тата П. Яжейкин юлташсем «шӑн-шӗн», «сӑр-сӗр» пайсене малалла та стабильнӑй учебникри пек хыҫсӑмахсем шутӗнче хӑварасшӑн. Анчах чӗлхе малалла аталанса пырать, учебник та унӑн аталанӑвӗ йӗррипе улшӑнса пыма кирлӗ. Стабильнӑй учебник та—вӑхӑтлӑ япала.

3. Пару-тӑву падежӗ ҫинчен. Стабильнӑй учебник пару падежӗ кама-мӗне панине, тивнине, кирлине, ӑҫта кайнине пӗлтерет, тӑву падежӗ **мӗн тунине** (курсив пирӗн—И. С.), мӗн курни-илтнине пӗлтерет, тесе вӗрентет (1952, 45 стр.). Пару падежӗпе тӑву падежӗ хӑйсен пӗлтерӗшӗсем енчен уйрӑлса тӑраҫҫӗ тени пулать ӗнтӗ вӑл. Анчах ҫапла-ши вӑл тӗрӗссипе?

Предложенири ытти сӑмахсемпе ҫыхӑнса тӑни енчен пару тата тӑву падежӗсем каллех нимӗнпе те уйрӑлса тӑмаҫҫӗ.

«Ачасене (пару п.) премин пачӗҫ». «Эпӗ ачасене (тӑву п.) куртӑм».

Ҫак икӗ падеж формисен ыйтӑвӗсем пӗрех: камсене? мӗнсене? кама? мӗне? Тӑву падежӗн мӗн? мӗнсем? ыйтӑвӗсем—тӗп падежӑн ыйтӑвӗсем. Ӑҫта? ыйту ҫине ответлекен сӑмахсене стабильнӑй учебникра мӗншӗн пару падежне кӗртни пирӗншӗн халӗ те паллӑ мар вара. Тепӗр тесен, ӑҫта кайнине пӗлтерекен сӑмахсене мӗн тунине пӗлтерекен сӑмахсемпе пӗрле мӗншӗн тӑву падежне кӗртмен-ха?

Кӗскерех каласан, кама-мӗне пани, тивни, ӑҫта кайни (пару п.), мӗн курни-илтни (тӑву п.)—пӗтӗмпех мӗн туни (тӑву п.) пулать. Пару тата тӑву падежӗсем этемӗн, чӗрчунсен, йӗри-тавраri япаласен тӗрлӗ ӗҫӗсене кӑтартаҫҫӗ. Пару падежӗ вара тӑву падежӗн пӗчӗкрех пайӗ ҫеҫ пулса тухать (пани, тивни, ӑҫта кайни — мӗн туни).

Ҫапла вара, пӗлтерӗшӗсене, ыйтӑвӗсене, предложенири ытти сӑмахсемпе мӗнле ҫыхӑнса тӑнине шута илсен, пару тата тӑву падежӗсене пӗрлештерни чӑваш чӗлхи вӗрентӗвӗн тепӗр тӗрӗс утӑмӗ пулӗ.

Тӑву падежӗнчи сӑмахсем тулли формӑллӑ та, кӗске формӑллӑ та пулни тӑву падежне пару падежӗнчен уйӑрма кирлине пӗлтермест, мӗншӗн тесен тӑву падежӗнчи кӗске формӑллӑ сӑмахсем тӗп падежа кӗреҫҫӗ.

Методика енчен илсен те, ку таранччен пару тата тӑву падежӗсене ш[illegible] ачасем сахал мар пӑтраштарнӑ [illegible] (кун ҫинчен В. Антонов юлташ [illegible] ҫырчӗ). Ҫав пӑтрану вырӑс чӗлхин [illegible] рентнӗ чух та пысӑк чӑрмав кӳрет [illegible] сем пӗрмаях ҫакӑн пек йӑнӑшсем [illegible] ҫӗ: «Эпӗ ҫак ҫынна курнӑ» тенин[illegible] видел этому человеку» тесе. Кус[illegible] «Ҫынна» сӑмаха пару падежӗнч[illegible] шутласа, вырӑсла та пару падежӗ ф[illegible] минех лартаҫҫӗ.

Пирӗн каллех ҫак пӗрлештернӗ [illegible] «пару-тӑву падежӗ» мар, «тӑву па[illegible]дежӗ» тесе калас килет, мӗншӗн тесен у[illegible] тӗп пӗлтерӗшӗ—мӗн туни.

4. Чӑваш чӗлхинчи глаголсен вид категорийӗ ҫинчен. Чӑваш чӗлхинче вид категорийӗ пурри ҫинчен пачах ним[illegible] те ҫырмаҫҫӗ вара. Ку ыйту хӑшпӗр чӗлхеҫӗсене те, учительсене те тахҫантанпах интереслентерет.

Чӑваш чӗлхинче те хӑшпӗр глаголсем ӗҫ вӑраха тӑсӑлнине е нумай ху[illegible] пулса иртнине, теприсем—ӗҫ пӗр самантра пулса иртнине е пӗр хут ҫеҫ пулнине кӑтартаҫҫӗ.

Акӑ тӗслӗхсем: вула, шутла, юрла, ӗҫле, ҫывӑр т. ыт. глаголсем ӗҫ нумай хут пулнине е нумай вӑхӑта тӑсӑлнине кӑтартаҫҫӗ; кала, кӗр, хуп, уҫ, сик т. ыт. глаголсем ӗҫ пӗр хут пулассине, пӗр самантра ҫеҫ пулса иртессине кӑтартаҫҫӗ.

Паллах, чӑваш чӗлхинчи глаголсен вид категорийӗ вырӑс чӗлхинчи глаголсеннинчен уйрӑлса тӑрать: пӗлтерӗшӗ енчен те, форми енчен те, пулӑвӗ енчен те.

Ку ыйтӑва тимлӗн пӑхса тухас пулать, пысӑк материал пухса, кирлӗ выводсем тӑвас пулать.

Ҫакӑн пек татӑ паман ыйтусем чӑваш чӗлхинче сахал мар. Вӗсене татса парассине вӑраха тӑсни чӗлхе вӗрентӗвӗн аталанӑвне чӑрмантарса ҫеҫ тӑрӗ.

И. САПОЖНИКОВ,
Етӗрне районӗнчи Ирҫе вӑтам шкулӗн учителӗ.

1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе лайăх ирттерер

Ăна пурте хисеплеççĕ

Кĕркуннехи ир. Кушкăри çыхăну уйрăмĕн кантурĕнчен вăтам çулсенчи çын тухрĕ. Йĕнерленĕ лаши çине хăпарса ларчĕ те Йĕпремелле çул тытрĕ. Ку вăл Мичурин ячĕпе тăракан колхозри почтальон Александр Николаевич Брызгалов пулчĕ.

Кашни ирех ăна çакăнта тĕл пулма пулать. Вăйлă çил-тăмана та, чĕреслетсе çăвакан çумăра та пăхса тăмасть вăл. Ĕçсыннисем патне çĕнĕ хаçат-журналсем, çырусем вăхăтра çитерсе парассине хăйĕн хисеплĕ тивĕçĕ тесе шутлать. Паян та, акă, çумăр витĕрех килнĕ. Ахальтен мар ăна колхозри парторганизацинче партие халăхпа калаçма, халăхпа çыхăнтарма пулăшакан пултаруллă çын вырăнне хурса хаклаççĕ. Парти хаçат-журналсем урлă халăхпа калаçать. Çавăнпа хаçат-журналсене халăх патне вăхăтра çитерни кирлĕ.

Вăл ĕçлекен пĕрлешсе пысăкланнă колхоза 4 ял кĕрет. Сурăм вăрман хуçалăхне те унăннах çитмелле. Кунне 20—22 километр çаврăнса çÿреме тивет. Хăшпĕр чухне подписчиксем хушшинче 9—10 сехет те пулать. Çак çула çуран çаврăнса тухаймăн ĕнтĕ. Çулла ăна велосипедпа, çуркуннепе кĕркунне юланутпа, хĕлле çунапа çÿренине куратăн.

Ырă та пархатарлă ĕç тăвать вăл: халăх хушшине чăнлăх, ырă хыпар, çĕнĕ хыпар сарать, çынсене хаçат урлă пĕр-пĕрипе паллаштарать, наукăсен çитĕнĕвĕсемпе малта пыракан опыта сарать. Пирĕн çĕршывра тата пуян та илемлĕрех пурнăç—коммунизм тума пулăшать.

Акă Йĕпрем ялĕ. Çакăнтан пуçлать вăл яланах хаçат-журналсемпе çырусене валеçме. Колхоз пулнă хыççăн ялпа пĕрле унти çынсем те çĕнелнĕ, культурăланнă. Йĕркеренех шап-шурă занавескăсем çакнă чÿречеллĕ пÿртсем. Колхозниксен килĕсене çĕвĕ машинисем, радиоприемниксемпе патефонсем, чечексем илемлетеççĕ. Сахал мар колхозник килĕсене 2—3 экземпляр хаçат-журнал килсе тăрать. Уй-хир ĕçченĕсен сĕтелĕсем çинче çиме-ĕçмелли те çителĕклĕ. Колхоз кăçал аванс шучĕпе кăна 2 килограмм тырă валеçнĕ. Пахча çимĕçсем те çитеççĕ. Халĕ ялта çĕнĕ пÿртсем лартаççĕ, выльăхсем туянаççĕ.

— Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти пленумĕ йышăннă постановлени хыççăн колхозлă ялта пысăк улшăнусем пуласса шанатпăр,— терĕ Брызгалов юлташ.— Хам та МТС-а каялла таврăнмалла, анчах, питĕ шел, сывлăх начар тесе тракториста ĕçлеттересшĕн мар. Почтальонрах çÿреме тивет пулĕ.

Вăл кăшт хумханни сисĕнет. Унăн ялхуçалăхне малалла вăйлатассишĕн пыракан кĕрешĕвĕн ответлă участокĕнче—колхозсен уй-хирĕсенче пулас килет.

Александр Николаевичăн пĕр кунхи ĕçĕ çинчен кăна каласа кăтартма та чылай вăхăт кирлĕ. Хăй вăхăтĕнче ун çинчен очерк çыракансем те пулнă ĕнтĕ. Паян унăн хăшпĕр ĕçĕсем çинчен кăна чарăнса тăратпăр.

Аслă Отечественнăй вăрçăран аманса таврăнсанах вăл счетоводра ĕçленĕ, кайран, виçĕ çул каялла, почтальон пулса ĕçлеме тытăннă. Унăн кăкăрне икĕ орден, медальсем илемлетеççĕ.

Хăшпĕр почтальонсем хаçат çырăнакансем çук, тесе ÿпкелешме пăхаççĕ. Брызгалов юлташ ĕçлекен колхозра вара артель членĕсем хаçат çитмест тесе вăрçаççĕ.

Ял хĕрринчи кăçал çеç лартнă çĕнĕ пÿртре ватă колхозница Татьяна Евгеньевна почтальона хапăл тусах кĕтсе илчĕ.

— Мĕнле çĕнĕ хыпарсемпе?

— Партипе правительство хăйсемшĕн тăрăшни çине колхоз хресченĕсем хĕрÿ ĕçпе ответлеççĕ. Пур хаçатсенче те ялхуçалăхне малалла вăйлатмалли çĕнĕ кĕрешÿ пуçланни çинчен пĕлтереççĕ... Анастасирен, акă, çыру та пур. Çамрăк пулсассăн ташламасăр парас çук та, паян парас пулĕ,— шÿт туса илчĕ почтальон.

Татьяна Евгеньевнăн икĕ хĕр. Анастасия педагогика институчĕ пĕтернĕ, учительницăра ĕçлет. Кĕçĕнни — Степанида ял Совет секретарĕнче ĕçлет.

— Эсир унта, Александр Николаевич, çĕнĕ çулта хаçатсăр ан хăварăр. Халех заявка парас пулĕ,— терĕ ферма картишĕнчен тухнă чухне аслă конюх А. Павлов юлташ.

Вăл çеç мар, колхозниксем пурте пекех çĕнĕ çулта хаçат илме çырăнасшăн. Александр Николаевич пурне те тивĕçтерме тăрăшать. Колхозри ертсе пыракан çынсене — уй-хир бригадирĕсемпе ферма заведующийĕсене «Сельское хозяйство», «Коммунизм ялавĕ» тата районти «Коммунизм çулĕпе» хаçатсене сĕнет. Коммунистсемпе комсомолецсем, агитаторсем патне çитсен, хаçатсемсĕр пуçне «Агитатор блокночĕ» çинчен сăмах хускатать.

Пĕр сăмахпа каласан, ăста мĕн вырнаçтармаллипе аван пĕлсе çитнĕ.

Подписчиксем патне кĕрсе çеç тухмасть, вĕсемпе калаçать, çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче е урăх çĕрте колхозниксем пухăннă пулсан, вĕсемпе калаçусем ирттерет. Хăйсем вулайман çынсене хаçат вуласа парать.

Хаçатсене кĕске вăхăтлăха, 3-шер уйăха çырăнас текенсене те хирĕçлемест. Анчах вĕсемпе ытларах ĕçлеме тивет. Ун пеккисене вăл уйăх маларах подписка срокĕ тухасси, ăна малалла тăсасси çинчен пĕлтерет.

Кушкăри çыхăну уйрăмĕнче 6 почтальон. Александр Николаевич ыттисене пример кăтартать. Канашлусенче те, ытти чухне те хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарать. Ахальтен мар çак почта уйрăмĕ хаçат сарассипе Красноармейски районĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнать.

Лайăх ĕçленĕшĕн хастарлă почтальона темиçе хутчен те, районтан та, Шупашкартан — Çыхăну управленийĕнчен те премисем панă.

Брызгалов юлташ ĕçри чăрмавсем çинчен те каласа парать.— Районти «Союзпечать» уйрăмĕн организаторĕ И. Петров юлташ çаврăнăçусăр ĕçлет, — тет вăл. Чăн та, кунта колхозри почтальонсемпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, вĕсен канашлăвĕсене сайра хутра çеç ирттереççĕ. Лайăх ĕçлекенсен опытне сармаççĕ.

Районтан Кушкăна çĕнĕ хаçатсене каç умĕн илсе пыраççĕ, вĕсене ирхине кăна салатма тивет. Брызгалов юлташ хаçатсене иртерех илсе килме, вĕсене çав кунах подписчиксем патне çитермелле тума кирли çинчен те каласа парать.

Н. ОРЛОВ.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен юлташсем (сулахайран сылтăмалла): В. П. ПОРФИРЬЕВА — Канаш хулинчи 4-мĕш участок почтальонĕ; М. И. ИЛЬИНА—Канаш районĕнчи «Комбайн» колхоз почтальонĕ; Г. А. АЛЕКСАНДРОВ—«Союзпечатĕн» Чурачăк районĕнчи организаторĕ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕсем.

Кашни кил хаçат-журнал илет

1935 çулта мана пуçламăш парторганизаци секретарĕпе колхоз председателĕ правление чĕнтерчĕç те çапла каларĕç:

— Николай Павлович, эпир сана ответлă ĕç—политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç шанса парасшăн,— терĕç.

Эпĕ ун чухне колхозра тăрăшса ĕçлекенсенчен пĕри пулнă. Колхоз руководителĕсем сĕннипе килĕшрĕм. Почтальон ĕçне туса пыма сăмах патăм. Çак вăхăтран вара эпĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăра пулнă çулсене шутламасан, пĕр улшăнмасăр колхозра почтальон пулса ĕçлетĕп.

Тăрăшсан, кирек мĕнле ĕçре те пултарулăха кăтартма пулать. Мана малтанхи çулах ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас енĕпе республикăра пĕрремĕш вырăн йышăннăшăн республикăри «Союзпечать» уйрăмĕ велосипед парса премилерĕ. Паллах, ĕçе пысăка хурса хаклани тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕ.

Почтальон пулса ĕçлеме пуçланăранпа манăн ĕçе чысласа преми паман çул пĕрре те пулман. Кашни çулах е укçа, е *урăх хаклă япаласем парса парнелеççĕ.* Иртнĕ çул 225 тенкĕ преми илтĕм. Кăçал вара 150 тенкĕ тата «Хисеп грамоти» пачĕç.

Эпĕ кашни çемье хаçат-журнал илсе тăмалла пултăр тесе тăрăшатăп. Тăрăшсан ĕç пулатех. Еншик ялĕнчи 210 килĕ 300 экземпляр ытла хаçат-журнал килсе тăрать. Халĕ эпĕ ку цифрăна тата ÿстерессишĕн, çитес çул 400 экземплялртан кая мар хаçат-журнал илсе тăмалла тăвассишĕн тăрăшатăп.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче 1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарасси пуçланчĕ. Ку ĕçе те вăхăтра пуçăнтăм.

Хаçат-журнал сарас ĕçри манăн тĕп тĕллев вăл—харпăр хăй валли хаçат-журнал çырăнса илекенсенчен подписка йышăнасси пулса тăрать. Çавăнпа та эпĕ кашни ĕçсыннине вăл мĕнле хаçат-журнал çырăнса илме кăмăл тăвать, çав хаçат-журнала çырăнса илме май туса паратăп. Ĕçсыннисене хаçатсемпе журналсем илсе тăма нумай вăхăтлăха, çулталăклăха е çур çуллăха çырăнтаратăп. Çапла туни вăл маншăн та, подписчиксемшĕн те питĕ лайăх.

Манăн çакăн пек йĕрке: эпĕ хаçат çырăнса илекенсене республикăри тата районти хаçатсене вĕсем пичетленсе тухнă кунах валеçсе паратăп. Хăшпĕр чухне каçа юлма тĕл килет. Апла пулсан та çав каçах хаçат-журналсене кашни килех çитеретĕп.

Халăх хушшинче хаçат-журнал ăнăçлă сарасси, паллах ĕнтĕ, пуринчен ытла эпир, почтальонсем, пуçламăш парторганизацисем уйăрнă обществăлла уполномоченнăйсемпе тата агитаторсемпе таччăн çыхăнса ĕçленинчен килет. Çавăнпа та çак ответлă ĕçе активпа пĕрле алла-аллăн çыхăнса ĕçлесе тăватăп. Çак ыйтупах калаçусем ирттеретĕп, пухусенче, канашлусенче тухса калаçатăп, коммунистла пичетĕн пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен ĕçсыннисене ăнлантарса паратăп.

Иртнĕ çул Н. Максимов колхозник пĕр экземпляр хаçат илсе тăнă. Кăçал вăл 1954 çул валли 4 тĕслĕ хаçат-журнал çырăнса илме кăмăл турĕ.

— Хаçат-журнал манăн чи çывăх тус,— тет вăл.

Н. Максимов юлташăн шухăш-кăмăлĕ çинчен, вăл хаçат-журналсене юратса вулани çинчен ытти колхозниксене те каласа патăм.

Кăçал колхозниксем уйрăмах республикăра тухса тăракан хаçатсене тата «Сельское хозяйство» хаçата çырăнса илме кăмăл тăваççĕ.

Ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе эпĕ Чăваш Ишек ялĕнчи Л. Кулакова почтальонпа ăмăртса ĕçлетĕп, 1954 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕçе Октябрьти Социализмла Аслă революци 36 çул тултарнă тĕле вĕçлеме пулатăп.

Ĕçсыннисем хушшинче подписка йышăнма пуçланă кунах 700 тенкĕлĕх ытла хаçат-журнал çырăнтартăм. Çĕнĕ çулшăн хаçат-журнал çырăнас енĕпе ялти учительсем уйрăмах пахa пример кăтартаççĕ. Шкул директорĕ П. Ильин юлташ 156 тенкĕлĕх, учительница Т. Иванова юлташ 120 тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Н. ПОЛЯКОВ,
Чкаловски районĕнчи Еншик ялĕнчи почтальон.

Эпир мĕнле ĕçлетпĕр

1949 çулта мана хамăр вăрманпромхозра ĕçлекенсем хушшинче хаçат-журнал сарма хушрĕç. Унтанпа эпĕ кашни çулах çак ĕçе тăрăшса хутшăнатăп. Çĕнĕ çулшăн подпискăсем йышăнмалли вăхăт çывхарсан, вăрманпромхозра ĕçлекенсем пурте тенĕ пекех ман пата пыраççĕ.

Мĕнле йĕркелетпĕр-ха эпир хаçат-журнал сарас ĕçе? Чи малтанах, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессем тата общежитисем валли хаçат-журнал çырăнатпăр. Çав вăхăтрах кашни рабочи аллинче хаçат-журнал пулмаллине те тĕплĕ асра тытатпăр. Пирĕн рабочисем хаçатсăр пурăнаймаççĕ. Вĕсен культурăллă шайĕ ÿссе пырать. Хаçат-журнал сарас ĕç—пĕччен тумалли ĕç мар. 7 участокран тăракан пирĕн вăрманпромхозра ку ĕçе уйрăмах актива ытларах хутшăнтарни кирлĕ. Подпискăсем йĕркелес ĕçе счетоводсемпе бухгалтерсене, агитаторсене анлăн явăçтаратпăр. Партбюропа пĕрле вĕсемпе канашлусем, калаçусем ирттеретпĕр. Вĕсем хăйсене çирĕплетнĕ участоксенчен кашни икĕ-виçĕ кунта ĕç мĕнле пыни çинчен пĕлтерсе тăраççĕ. Çапла тунипе 1953 çул валли 50 пин тенкĕлĕхе яхăн тĕрлĕ хаçат-журнал сартăмăр. Паянхи куна пирĕн вăрманпромхозри 760 çын 1.120 экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал илсе тăрать. Кашни рабочи тенĕ пек Мускавра, республикăра е тата районта тухса тăракан хаçата илсе тăрать. Кашни агитатор «Агитатор блокночĕ» илет.

Участоксенче хаçат çырăнтаракансенчен пĕлтĕр уйрăмах Сурски чугун çул кантурĕнче ĕçлекен М. Кукушкин, Анатри складри агитатор А. Иваницкий юлташсем пахa тĕслĕх кăтартрĕç. Вĕсем хăйсен участокĕсенче 193—305-шер экземпляр тĕрлĕ хаçат-журнал сарчĕç.

Хăшпĕр работниксем çулсеренех 6—7 тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илеççĕ. Эпĕ хам кашни çулах 5—6 хаçат-журналтан кая мар çырăнатăп. Кăçалхи çул М. Добросмыслов 7 тĕрлĕ, А. Григорьев, С. Запорожцев, Г. Ермаков, И. Николаев, М. Дмитриев юлташсем 4 е 6-шар хаçат-журнал илсе тăраççĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче 1954 çул валли хаçат-журнал çырăнтарма тытăнчĕç. Октябрĕн 10-мĕшĕнчех эпир пирĕн вăрманпромхоза мĕнле хаçат-журнал тата мĕн чухлĕ кирлине «Союзпечать» уйрăмне пĕлтертĕмĕр. Партбюропа пĕрле кăçал хаçат-журнал çырăнтарас тĕлĕшпе ирттермелли ĕçсене палăртса тухрăмăр, участоксенче хаçат саракан юлташсемпе канашлу ирттертĕмĕр.

Хаçат-журнал сарас ĕç—хисеплĕ те ответлă ĕç. Ăна эпир кăçал пĕлтĕрхинчен те йĕркеллĕрех ирттерессе шанса тăратпăр.

И. СИДУГАНОВ,
Сĕмĕрле вăрманпромхозĕнчи главнăй бухгалтер заместителĕ.

Почтальон чыслă ĕç тăвать

Эпĕ—Аслă Отечественнăй вăрçă инвалидĕ. Колхозри йывăр ĕçсене хутшăнаймастăп. Колхоз правленийĕ мана 1942 çулта фронтран аманса килнĕ хыççăн чыслă ĕç шанса пачĕ—почтальон пулса ĕçлеме уйăрчĕ. Çапла эпĕ 11 çул хушши ĕçлетĕп.

Почтальон чыслă ĕç тăвать. Ăна кашни килтех хаклă хăнана кĕтнĕ пек кĕтсе илеççĕ. Пирĕн колхоз икĕ ялтан тăрать. Кĕркуннехи е çуркуннехи вăхăтсенче Сителрен Пÿртлĕне çитме питĕ кансĕр, çул пылчăклă пулать. Эпĕ çав йывăрлăхсене пăхмасăр, кашни кунах районти почта уйрăмĕнчен хаçат-журналсемпе ытти корреспонденцисене илсе килсе, подписчиксем патне çитеретĕп.

1953 çулшăн эпĕ хаçат-журнал çырăнтармалли плана ирттерсе тултартăм. Икĕ яла (вĕсенче 230 кил шутланать) 4 экземпляр «Правда», 4 экземпляр «Комсомольская правда» 69 экземпляр «Коммунизм ялавĕ», 15 экземпляр «Советская Чувашия», 23 экземпляр «Çамрăк коммунист», 52 экземпляр район хаçачĕ килсе тăрать. Хăшпĕр колхозниксем 2—3-шер экземпляр хаçат çырăнса илеççĕ. Акă, А. Рейнов колхозник çемйи «Правда», «Коммунизм ялавĕ», «Пионерская правда» хаçатсем тата район хаçатне илсе тăрать.

Хаçат-журнал сарас енĕпе эпĕ колхозри партипе комсомол организацийĕсемпе тата колхоз правленийĕпе тачă çыхăнса ĕçлетĕп.

Çитес çулшăн ĕçсыннисене хаçат-журнал çырăнтарма тытăнтăмăр. Эпĕ кăçал пĕлтĕрхинчен ăнăçлăрах ĕçлеме пулатăп.

Ф. РУССАКОВ,
Первомайски районĕнчи «Пионер» колхозри почтальон.

Çитес çулшăн çырăнаççĕ

«Гвардия» колхозра Клавдия Алексеева почтальон пулса иккĕмĕш çул çеç ĕçлет-ха. Вăл хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать.

Республикăри тата районти хаçатсене тухнă кунах подписчиксем патне çитерет. Тепĕр чухне Уйкас çыхăну уйрăмне каç еннелле кăна хаçат-журналсем илсе пыраççĕ. Кунтан вăл çÿрекен ялсем 4—5 çухрăмра. Алексеева пур яла та, каç пулнине пăхмасăр, хаçат илнĕ кунах çитсе ĕлкĕрет.

Вăл тăрăшнипе кашни килех хаçат-журнал килсе тăрать. Вăл кĕнекесемпе маркăсем сутас ĕçе те чыслăн туса пырать. Çулталăк хушшинче кĕнекесем сутмалли плана вăл 200 процент, 9 уйăхра маркăсемпе конвертсем сутмалли плана—150 процент тултарчĕ.

Халĕ Алексеева ĕçсыннисене 1954 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарма пуçларĕ.

Х. ЛИСИН.
Сĕрпÿ районĕ.

ЛАЙĂХ ĔÇЛЕМЕ ПУЛЧĔÇ

Çак кунсенче БПСС Советски райкомĕ районти çыхăну работникĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Унта районти çыхăну кантурĕн начальникĕ П. Малов юлташ çыхăну работникĕсен III-мĕш кварталти ĕçĕсем çинчен тата 1954 çулшăн хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен доклад туса пачĕ.

Канашлура 7 çын тухса каларĕ. Тухса калакансем ĕçри çитменлĕхсене критиклерĕç. Мăн Чурашри çыхăну уйрăмĕн начальникĕ Черлаков тата Буденный ячĕпе тăракан колхозри почтальон Семенов хаçат-журнал сарас ĕçри опытпа паллаштарчĕç.

«СОВЕТ ЯЛАВĔ» хаçатран.

Малтанхи кунсенчи хăшпĕр ÿсĕмсем

Шупашкартан Етĕрнене каякан çул хĕрринче Хыркасси ялĕ курăнса ларать. Кунта сичĕ çул вĕренмелли шкул, ялпо правленийĕ, вулав çурчĕпе колхоз клубĕ, столовăй, магазинсем, çыхăну агентстви пур. Çул тăрăх кунĕн-çĕрĕн автомашинăсем çÿреççĕ.

Хыркасси тĕлĕнче кашни кунах, ирхине 10 сехет çитсен, почта машини чарăнса тăрать. Кунта çыхăну агентствине адреслесе çырнă çырусемпе хаçатсене парса хăварать те, машина малалла çул тытать.

Сичĕ çул хушши почтальон пулса ĕçлекен Анастасия Ефремовна Волкова Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕсемпе ялти интеллигентсем патне килтен-киле çÿреме тытăнать. Вăл чи кĕске вăхăт хушшинче паян кÿрсе килнĕ хаçат-журналсене салатса тухать. Ун хыççăн вăл каллех агентствăна пырать. Ишлей почти урлă илсе килнĕ хаçат-журналсене тата çырусене йышăнать, вĕсене те вулакансем патне вăхăтра çитерсе парать.

Кунта хаçат-журнал çырăнса илекенсем сахал мар. Хальхи вăхăтра кăна колхоз хресченĕсемпе ялти интеллигентсем «Коммунизм ялавĕ» хаçата 38 экземпляр, «Советская Чувашия»—49, «Правда»—11, «Пионерская правда»—30, районти «Колхозник хаçатне»—62 экземпляр тата ытти тĕрлĕ хаçат-журналсем нумай илсе тăраççĕ.

Ялти сичĕ çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен Юлия Дашкова учительница «Литературная газета», «Учительская газета», «Советская Чувашия», «Молодой коммунист», «Колхозник хаçачĕ» хаçатсене, «Роман-газета», «Литература в школе» журналсене, «Агитатор блокночĕ» çулсеренех çырăнса илет, вĕсене юратса вулать, вĕсем тăрăх хăйĕн политикăлла пĕлĕвне культура шайне ÿстерсе пырать. Дашкова юлташ çамрăк ăрăва коммунистла воспитани парас енĕпе тăрăшнипе пĕрлех, колхоз хресченĕсем хушшинче агитаци ĕçне туса пырать.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Семен Тереев «Советская Чувашия», «Правда», «Колхозник хаçачĕ» хаçатсене çырăнса илет, вĕсем тăрăх лайăхрах ĕçлеме вĕренет. Вăл ертсе пыракан артельти колхоз ĕçченĕсем çак çулти ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра ирттерчĕç, тухăçлă тĕштырă, пахча çимĕçсем пухса кĕртрĕç, государство умĕнчи тивĕçе срокчен пурнăçларĕç, аванспа тырă илчĕç, çураки валли вăрлăх хатĕрлерĕç. Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленине пурнăçласа, колхозниксем октябрĕн 1-мĕшне обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарчĕç.

Колхоз бригадирĕ Герман Долганов юлташ «Правда», «Коммунизм ялавĕ» хаçатсене çырăнса илсе вулать, колхозниксене хаçатсем çинчи çĕнĕ хыпарсемпе паллаштарать.

Иван Поляков, Нина Хрисанова тата ытти вуншар колхозниксемпе колхозницăсем активлă подписчиксем пулса тăраççĕ. Вĕсем хаçат-журналсене вăхăтра çитерсе панăшăн почтальона тав тăваççĕ.

Волкова юлташ хăйĕн ĕçне юратса тăвать. 1953 çулшăн вăл 3 пин те 500 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă пулнă. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна районти çыхăну кантурĕ темиçе хут та преми панă.

Çак кунсенче А. Волкова юлташ 1954 çулшăн ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарма тытăнчĕ. Вăл районти хаçата 51 экземпляр, «Коммунизм ялавĕ»—18, «Советская Чувашия»—15, «Çамрăк коммунист»—14, «Пионерская правда»—18 экземпляр тата ытти хаçат-журналсем нумай сарма ĕмĕтленет.

Вăл «Большевик» колхозри почтальонпа Елизавета Плотниковăпа ăмăртса ĕçлет. Малтанхи кунсенчех, вăл тĕрлĕ хаçат-журнал 37 экземпляр ытла сарчĕ, Ишлей районĕнчи çыхăну работникĕсене лайăх тĕслĕх кăтартрĕ.

В. ЧЕРНОВ.

ПОЧТАЛЬОН КИЛСЕН

Каç пулас умĕн Усырма ялĕн аслă урамĕсем тăрăх пырса, йывăр сумка çакнă вăтам çулхи хĕрарăм килрен-киле кĕрсе çÿреме тытăнчĕ. Ял çыннисем вăл çакăн пек çÿренине кашни кунах кураççĕ.

— Марфа Ильинична Канашран таврăннă, пире валли мĕн илсе килнĕ-ши?—урамрах кĕтсе тăраççĕ ăна хăшпĕрисем.

Акă, халĕ вăл ял варринчи вырăсла ханхаллă киле кĕрсе кайрĕ.

— Ман килес! Хуçисем килтех-и?—ăшшăн сăмах хушрĕ вăл, пÿрте кĕнĕ-кĕменех.

— Килех, йăмăк, иртсе лар. — хăна пек кĕтсе илчĕ ăна килхуçи, самаях ватă колхозник Иван Алексеевич.— Мĕн хыпарсем илсе килтĕр?

— Хыпарсем нумай, Иван пичче,—тулли сумкине хулпуççи çинчен хывса сак çине лартрĕ Ильина.— Сире валли çыру пур.

— Ăçтан-ши?

— Шупашкартан. Марьерен,— кăвак конверта килхуçине тыттарчĕ почтальон.

— Марьерен терĕр-и?.. Чылай пулатчĕ унран хыпар илменни. Темле вĕренет ĕнтĕ унта...— тĕпел кукринчи ĕçне пăрахсах вĕсем патне пырса тăчĕ Иван Алексеевичăн арăмĕ.

— Кÿр-ха, йăмăк, вуласа пар-ха аппин пире. Хамăн куçăмсем витĕрех мар. Куçлăхсăр вулаймастăп, — çырăва каллех почтальона каялла пачĕ Иван Алексеевич.

Ăшă саламлă çырăва вуласа панăшăн килхуçисем почтальона чĕререн ырă сунса тав турĕç. Анчах Марфа Ильинична ун хыççăн та çаплах тухса кайма васкамарĕ-ха. Вăл хăйĕн сумкинчен пĕр хаçат суйласа илчĕ те, ăна килхуçи умне илсе пычĕ.

— Эсĕ çак çынна курнă-и, Иван пичче?

— Мĕнле çынна? Хаçат çинче-и çак?..— сĕтел çунтăхĕнчен хайхи куçлăхне илсе тăхăнчĕ Иван Алексеевич.— Ăçта-ха вăл?

— Акă çакна.

Хаçат çинчи тулли пит-куçлă, кăкăр тулли орденсемпе медальсем çакнă паттăр сăн-сапатлă çын çине ватă колхозник нумайччен пăхса тăчĕ, ытă тинкерсе пăхса ларчĕ.

— Шăп-пĕр паллă çын пулас ку. Кам вара вăл?—ыйтрĕ унтан хаçата хурса.

— Çав вăл Прокофий Нектов ятлă,—ăнлантарчĕ почтальон.— Çак кунсенче ăна СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă. Вăл комбайнер. Чкалов облаçĕнчен.

— Тем ĕçпе чапа тухнă вара?

— Вăл кăçал, икĕ урасăр пулин те, «Сталинец-6» комбайн агрегачĕн коллективĕпе пĕрле 1.600 гектар тырă вырса, 12.200 центнер çапса панă.

«Правда» хаçатăн малтанхи страницинчех çырнă ун çинчен. Хаçат урлă темĕн те пĕлме пулать.

— Эпĕ хаçатсем вуламастăп та, пĕлейместĕп çав уç пеккисене.

— Ара, мĕнле-ха вăл хаçатсăр?.. Хаçат-журнал вуламасăр халь, Иван пичче, пурнăçпа шай пыма çук. Çавăнпа ăна пирĕн ялта та нумайăн çырăнса илеççĕ. Хамăрăн Шупашкарта тухакан хаçатсем кăна пирĕн яла çĕре яхăн килсе тăрасçĕ. Эсир темшĕн çырăнмастăр. Эпĕ сирĕн пата кашни кун тенĕ пекех килетĕп. Кенигсбергра пурăнакан хĕрĕртен, Бакура пурăнакан ывăлăртан, Горький хули çывăхĕнче ĕçлекен Петĕртен, е тата Марьерен çырусем илетĕр. Хаçат тавраш вара пĕрре те çук. Ху вулайăн пĕлетĕн эсĕ, Иван пичче, çĕнĕ хыпарсем итлеме юрататăн, çавах хаçат çырăнса илместĕн. Хаçат пире питĕ нумай вĕрентет вĕт-ха. Пĕркунне, ав, эсĕ манран государство колхозниксене паракан çăмăллăхсем çинчен ыйтса пĕлтĕн. Ун пек ыйтусене те хаçатра вуласа пĕлме пулать.

Иван Алексеевич кăштах шарламасăр ларчĕ.

— Тĕрĕс çав,— терĕ унтан, ерипен сĕкленсе.— Тĕрĕс калатăн эсĕ, йăмăк. Темшĕн аса илмен вара çавна, чăнах та. Темчул, питĕ хаклă япала пек... Малашне çырăнмаллах пулать. Хăçан çырăнса илме пулать-ши ăна?

— Çитес çулшăн подписка пухма пуçларăмăр ĕнтĕ, Иван пичче. Кăмăлăр пулсан, хуть паянах çырăнăр.

— Çырăнас апла,— тĕпелти шкафран укçа кайса илчĕ Иван Алексеевич.— Анчах мĕнле хаçат илсе тăрсан аванрах-ши?

— Хăвăн кăмăлу. Пур тĕрлĕ хаçата та илме пултаратăр.

...Иван Алексеевич почтальона хапхаран урама тухиччененех ăсатса ячĕ.

— Çирĕм килте çырăнчĕç-ха, — хăй ăшĕнче шутларĕ Марфа Ильинична унран уйрăлсан.—Кашниннех хăйĕн кăмăлне кура калаçас пулать вĕт. Пĕрисем хăйсем пырса çырăнаççĕ. Теприсемпе калаçас пулать.

Марфа Ильинична Ильина «Комбайн» колхозра 1944 çултанпа пĕр тăтăлмасăр почтальон пулса ĕçлет. Хăй ĕçне юратса туса пынăшăн ăна ял çыннисем те юратаççĕ ăна. Ял çыннисем патне килекен хаçат-журналсене, çырусене, посылкăсене, телеграммăсене вăл яланах вăхăтра тата тĕрĕс çитерсе парать.

Ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журналсем çырăнтарас ĕçе вăл çулленех тăрăшса туса пырать. Халĕ вăл ял Советне кĕрекен Анатнас Усырма, Уйпуç тата Кĕлте Сулĕ ялĕсенче, ялти сичĕ çул вĕренмелли шкулта, Канашри кирпĕч завочĕпе вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен рабочисемпе служащисем хушшинче çитес 1954 çулшăн хаçат-журналсем çырăнтарма пуçларĕ.

Çакăнпа пĕрлех Ильина юлташ—ялти активлă общественница. Кăçал ăна виççĕмĕш хут ял Совечĕн депутатне суйланă. Вăл ял Совечĕн санитари комиссин членĕ.

Иван Алексеевичсем патĕнчен тухсан, вăл тÿрех колхоз правленине кайрĕ. Кунта ăна çамрăксен ушкăнĕ çырăнса илчĕ.

— Ну, мĕнле, Марфа Ильинична? Эпир калаçа янисене тупса килтĕр-и?—пĕрин хыççăн тепри ыйтрĕç çамрăксем.

— Тупса килмесĕр,— терĕ Ильина.— Эсир ыйтнипе мĕншĕн пурнăçлас мар?

Вăл хăйĕн сумкинчен тĕрлĕ кĕнекесемпе брошюрăсем кăларма пуçларĕ.

— Хрущев юлташ доклачĕ кама, кирлĕччĕ-ха?.. Маленков юлташ доклачĕ?.. Пленум йышăннă постановлени?.. Акă, илĕр!.. Кам-ха тата «Шурă хурăн» роман илме укçа парса ячĕ? Вăл та пур...

Çак япаласене илсе килме ăна комсомолецсен политшкулĕнче вĕренекенсем ыйтса янă.

Калас пулать, халăх хушшинче кĕнеке сутас тĕлĕшпе те Ильина юлташ пысăк ĕç тăвать. Районти «Союзпечать» уйрăмĕнчен илсе килсе, вăл ялти ĕçсыннисем хушшинче кăçалхи тăхăр уйăхра пилĕкçĕр тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ кĕнекесемпе журналсем, брошюрăсем, плакатсемпе картинăсем, календарьсем сутнă.

Çамрăксем илме парса янă кĕнекесемпе брошюрăсене валеçсе пĕтернĕ çĕре ун патне «Коммунизм ялавĕ» хаçатпа районти «Коммунизмшăн» хаçатăн активлă корреспонденчĕ Кузьмин юлташ пырса тăчĕ.

— Марфа Ильинична! Эсĕ мана квитанцисем пар-ха. Эпĕ сана хаçат-журналсем сарма пулăшам. Çырăнас текенсем пур, каласрăм. Пурин патне те хăвна пĕччен çитме йывăр сана,— терĕ вăл.

Ĕçсыннисем хушшинче хаçат-журнал сарас ĕç—политикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç. Кунта çакна лайăх ăнланаççĕ.

С. АСЛАН.

Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери виҫҫӗмӗш конгресӗ

Октябрӗн 18-мӗшӗнчи каҫхи лару

ВЕНА, октябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Каҫхи ларура сӗнӳсем енӗпе ӗҫлекен комисси членӗ Ярослав Колар (Чехословаки) Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери конгресӗ ячӗпе тӗрлӗ ҫӗршывсенчен саламлӑ ҫырусемпе телеграммӑсем 2.572 килни ҫинчен пӗлтерет. Ҫакӑн хыҫҫӑн председатель пулса ертсе пыракан Тодор Прахов (Болгари) кун йӗркинче тӑракан виҫҫӗмӗш ыйту тӑрӑх «Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче профсоюзсен юхӑмне аталантарасси ҫинчен» доклад тума Руслан Виджаджасастрана (Индонези) сӑмах парать.

Виджаджасастрана конгресс делегачӗсем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса йышӑнаҫҫӗ.

Р. Виджаджасастра доклачӗ

ВЕНА, октябрӗн 18-мӗшӗ. (ТАСС). Пӗтӗм Индонезири профсоюзсен центрӗн генеральнӑй секретарӗн заместителӗ Виджаджасастра хӑйӗн доклачӗн пуҫламӑшӗнче ҫакна палӑртнӑ: Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери иккӗмӗш конгресӗ пулса иртнӗ хыҫҫӑн тӑватӑ ҫул хушшинче колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи рабочисен пурнӑҫпа ӗҫ условийӗсем тата ытларах начарланнӑ. Ҫак ҫӗршывсенчен хӑшӗ-пӗрисенче вара ӗҫ укҫи, вӑрҫӑчченхи шайпа танлаштарсан, ҫуррине яхӑн чакнӑ.

Вуншар миллион арҫынсемпе хӗрарӑмсем е пачах ӗҫсӗр тӑрса юлнӑ, е вӑхӑтран вӑхӑта кӑна ӗҫлесе тӑраҫҫӗ. Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче ӗҫ условийӗ питех те йывӑр, ӗҫ укҫи пӗчӗк. Нумай ҫӗршывсенче рабочисене тӗрлӗ майсемпе ирӗксӗр ӗҫлеттереҫҫӗ. Ӗҫсыннисен хваттер условийӗсем питех те йывӑр.

Колониллӗ ҫӗршывсенче урӑх расӑллӑ ҫынсене нимӗн вырӑнне те хумаҫҫӗ. Ҫакӑн пек пулни рабочисен ӗҫ укҫинче те, йӑла условийӗсенче те, политикӑлла правасенче те палӑрать. Сурҫӗр Родезире, тӗслӗхрен, Африка ҫынни тимӗр тӑпри кӑларнӑ ҫӗрте, европеец ҫыннипе танлаштарсан, 1/20 чухлӗ кӑна ӗҫ укҫи илет. Кенире негрсем, европеецпа танлаштарсан, ӗҫ укҫи 50 хут сахалтарах илеҫҫӗ.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи рабочисен пурнӑҫ условийӗ ҫакӑн пек начар пулни империалистсем тытса пыракан вӑрӑ-хурахла политикӑран килет.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче миллиард ҫын ытла пурӑнать. Ку вӑл капитализмла ҫӗршывсенче пурӑнакан пӗтӗм халӑх йышӗнчен 70 проценчӗ пулать. Анчах ҫак ҫӗршывсенче промышленность производстви, капитализмла ҫӗршывсенчи промышленность производствипе танлаштарсан, 5 процент чухлӗ кӑна шутланать. Ют ҫӗршывсем ҫак ҫӗршывсене хывакан капитал йӳнӗ хакпа чӗртавар туянма, уйрӑмах метрополисем валли стратегиллӗ материалсем туянма кӑна каять. Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсем таварсем вырнаҫтармалли тата пысӑк услам илмелли вырӑн кӑна пулса тӑраҫҫӗ. Ҫак пӗтӗм ӗҫе монополисем хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ. Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче ҫар экономики туса хуни тата ҫак ҫӗршывсене хӗҫпӑшаллантарни промышленноҫӑн мирлӗ отраслӗсене аталантарма тата ытларах кансӗрлет.

Ҫак ҫӗршывсенче феодалла тата ҫурма феодалла ҫӗрӗҫ йӗрки ҫаплах тытӑнса тӑни ялхуҫалӑхӗ енӗпе экономикӑна тата социальнӑй пурнӑҫа аталантарассине чӑрмантарса тӑрать. Ҫак ҫӗршывсенче нумайӑшӗнче питех те пысӑк территорисем ют ҫӗршывсен монополийӗсем аллинче тӑраҫҫӗ. Тӗслӗхрен, Малайӑра каучук плантацийӗсем йышӑнакан ҫӗрӗн тӑватӑ пайӗнчен виҫӗ пайӗ Англи тресчӗсен аллинче тӑрать. Центральнӑй Америкӑра Америкӑн «Юнайтед фрут компани» монополийӗ тырпул лайӑх пулакан ҫӗре 2,5 миллион гектар чухлӗ хӑйӗн аллине туртса илнӗ. Алжирта французсен компанийӗсем пӗтӗм ҫӗртен 55 процентне хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ.

Колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи ӗҫсыннисем чухӑн пурӑннипе усӑ курса монополистсем питех те пысӑк услам илеҫҫӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пилӗк ҫул хушшинче Америка монополисчӗсем, урӑх ҫӗршывсене, ытларах колонисемпе ҫурма колонисене капитал хывса, 7.500 миллион доллар услам илнӗ. 1950 тата 1951 ҫулсенче Малайӑри тӑхлан промышленноҫне тытса тӑракан Англи монополийӗсем хӑйсен акционерӗсене вӗсем хывнӑ капитала кура 70 процентран пуҫласа 100 процент таран услам тӳлесе тӑнӑ.

Виджаджасастра малалла ҫакна палӑртнӑ: колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче экономика тӗлӗшпе пуҫ пулса тӑрас тесе, империалистсем чи тискер меслетсемпе, агрессиллӗ вӑрҫӑсемпе усӑ кураҫҫӗ.

Аслӑ Китай халӑхӗн ҫӗнтерӗвӗ империалистсем Хӗвелтухӑҫӗнче пуҫ пулса тӑрассине хавшатрӗ. Ҫак ҫӗнтерӳ вӑл пӗтӗм тӗнчере истори тӗлӗшӗнчен пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫак ҫӗршывра тӗнчери пӗтӗм халӑх йышӗнчен чӗрӗк пайӗ таран пурӑнать. Тӗнчери мире юратакан мӗнпур халӑхсем, уйрӑмах Китай халӑхӗ пулӑшнипе Корея халӑхӗ тунӑ аслӑ ҫӗнтерӳ ҫакна кӑтартса парать: империалистсем текех хӑйсен ӗлӗкхи пурнӑҫне каялла таврӑма пултараймаҫҫӗ.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче наци ирӗклӗхӗшӗн пыракан юхӑм хӑвӑрттӑн вӑйланса пынине палӑртса, докладчик ҫапла каланӑ: ҫак юхӑм вӑл вӑрҫӑ хыҫҫӑн тӗнчери лару-тӑрура пулса тӑнӑ тӗп факторсенчен пӗри пулса тӑрать. Вӑл колониллӗ йӗрке арканассине хӑвӑртлатать.

Колониллӗ йӗркене тата ытларах аркатакан тепӗр фактор вӑл империализмла державӑсем колониллӗ ҫӗршывсенче экономикӑпа политика тӗлӗшӗнчен пуҫ пулса тӑрассишӗн пӗр-пӗрин хушшинче кӗрешни пулса тӑрать.

Америка монополисчӗсем халиччен Англи, Франци тата ытти колониллӗ державӑсем пуҫ пулса тӑнӑ ҫӗршывсене пырса кӗнӗ. Вӗсем унта халӑха эксплуатацилес тата вырӑнти ресурссемпе усӑ курас тӗлӗшпе хыттӑнах ҫирӗпленсе ларнӑ.

Колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенче профсоюзсен юхӑмӗ халӑх массисен пурнӑҫпа ӗҫлев условийӗ малалла начарланса пынӑ лару-тӑрура, колониллӗ йӗрке арканса пынӑ условисенче, уйрӑмах наци ирӗклӗхӗшӗн пыракан юхӑм вӑйланнӑ условисенче аталанать те ӗнтӗ, тенӗ Виджаджасастра.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче профсоюзсен юхӑмӗ империалистсемпе вӗсен агенчӗсем репрессисем тунӑ тата раскольникла ӗҫсем тунӑ условисенче аталанса пырать пулсан та, вӑл хӑвӑрттӑн вӑйланать. Ӗҫсыннисем ытларах та ытларах массӑллӑн кӗрешеҫҫӗ. Нумай ҫӗршывсенче хресченсем, халӑхӑн вӑтам сийӗсем, ремесленниксем, пӗчӗк лавкка тытакан ҫынсем тата интеллигентсем пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатассишӗн рабочи класӑн кӗрешӗвне хутшӑнаҫҫӗ. Кӗрешӗве ӗҫсыннисен ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ сийӗсем хутшӑнаҫҫӗ. Экономикӑлла ыйтусене тивӗҫтерессишӗн пыракан кӗрешӳ халӑхсем ирӗке тухассишӗн тата миршӗн кӗрешессипе таччӑнрах ҫыхӑнса пырать.

Докладчик колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенче профсоюзсен юхӑмӗ вӑйланса пыни ҫинчен калакан нумай тӗслӗхсем илсе кӑтартать.

Рабочисен юлашки тӑватӑ ҫул хушшинче пулса иртнӗ кӗрешӗвӗ ҫакна кӑтартса парать, тенӗ докладчик: колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенче профсоюзсен юхӑмӗн рабочисен социальнӑй тата экономикӑлла прависемшӗн, демократиллӗ ирӗклӗхсемшӗн кӗрешме, вӗсене хӳтӗлеме, наци ирӗклӗхӗшӗн пыракан юхӑма хутшӑнма ҫителӗклӗ таран вӑй пур.

Виджаджасастра малалла колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи профсоюзсен задачисем ҫинче чарӑнса тӑнӑ.

Пӗрремӗш вырӑнта тӑракан пысӑк задача, тенӗ вӑл, социальнӑй тата экономикӑлла ырлӑхшӑн кӗрешесси тата ҫак ырлӑха хӳтӗлесси пулать.

Ҫак кӗрешӗве тивӗҫлипе организацилес тесен, тенӗ вӑл, кашни ҫӗршыври профсоюз организацийӗсен рабочисен экономикӑлла тата социальнӑй ыйтӑвӗсене тӗплӗн сӑнаса вӗренесси тата ҫакӑн тӑрӑх кӗрешӗвӗн практикӑлла программине туса хатӗрлесси пулать.

Ҫак программӑна пурнӑҫа кӗртес ӗҫре рабочисен кӗрешӗвне халӑхӑн ытти сийӗсем, уйрӑмах хресченсем, ремесленниксем, вак сутуҫӑсем пулӑшни кирлӗ. Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи профсоюз организацийӗсем рабочисене халӑхӑн ытти сийӗсем енчен пулӑшмалла тӑвас тӗлӗшпе пысӑк опыт туянчӗҫ ӗнтӗ. Хӑшпӗр ҫӗршывсенче вӗсем ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсемшӗн пӗрлешсе кӗрешес тӗлӗшпе пӗрлӗх фрончӗ туса хучӗҫ.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи рабочисемшӗн пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан тепӗр ыйту вӑл профсоюзсен прависене хӳтӗлесси, ҫакӑн пек правасем ҫук ҫӗршывсенче вӑл правӑсене кӗрешсе илесси пулать.

Ҫитӗнӳсем тумалли тӗп услови вӑл, тенӗ докладчик, ӗҫсыннисен кӗрешӗвӗнче пӗрлӗх туса хурасси пулать.

Пирӗн опыт ҫакна кӑтартать: пӗтӗм тӗнчери ӗҫсыннисем пӗр шухӑшлӑ пулнӑ чухне реакци каялла чакать. Анчах та, пӗр шухӑшлӑ пулни хӑйӗн влиянине туллин палӑрттӑр тесен, капитализмла ҫӗршывсенчи пирӗн туссен ытларах вӑй хурса кӗрешес пулать. Пӗтӗм тӗнчери ӗҫсыннисем пӗр шухӑшлӑ пулни пур ӗҫсенче те палӑртӑр. Пусмӑрлӑха хирӗҫ тата профсоюзсен прависем ҫине тапӑннине хирӗҫ вӑйлӑн кӗрешмелле. Ҫакӑн пек пӗрлешсе кӗрешсен кӑна ҫитӗнӳ тума пулать.

Виджаджасастра колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи ӗҫсыннисем пӗр шухӑшлӑ пулни вӑйланса пыни ҫинчен калакан чылай тӗслӗхсем илсе кӑтартать.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи профсоюзсен юхӑмӗ умӗнче пысӑк задача тӑрать, тенӗ Виджаджасастра, мӗнпур рабочисемпе,—вӗсем политика тӗлӗшӗнчен мӗнле шухӑш тытнине тата мӗнле профсоюзра тӑнине, вӗсем мӗнле раса ҫыннисем пулнине тата мӗнле тӗн тытнине пӑхмасӑр,—тачӑ ҫыхӑну тытас пулать.

Колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи профсоюзсен малашнехи задачисем ҫинче чарӑнса тӑрса, докладчик ҫакна кӑтартса панӑ: профсоюз организацийӗсен рабочисен анлӑ массисене миршӗн пыракан юхӑма хутшӑнтармалла; рабочисем хушшинче мире хӳтӗлессишӗн тата агрессиллӗ вӑрҫӑсене хирӗҫ активлӑ пропаганда сармалла. Ҫапла майпа рабочисен массисен халӑхӑн ытти сийӗсем хушшине хӑйсен влиянине кӗртсе пымалла; империалистсем Малайӑра, Вьетнамра тата ытти вырӑнсенче вӑрҫакан вӑрҫӑсене хирӗҫ, вӑл ҫӗршывсенче агрессиллӗ ҫарсем тӑнине е вӗсенче ҫар базисем туса хунине хирӗҫ е ытти кирек хӑш ҫӗршывра та империалистсем агрессиллӗ ӗҫсем тунине хирӗҫ кӗрешмелле; тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа татса пама чӗнмелле. Профсоюзсен хресченсене хӑйсен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатассишӗн тата аграрлӑ реформӑшӑн кӗрешме, организацилеме пулӑшмалла, рабочисемпе хресченсем пӗр-пӗрне пулӑшни пысӑк вырӑнта тӑни ҫинчен пур майсемпе те ӑнлантарса памалла.

Профсоюзсен, тенӗ вӑл, экономикӑлла никама пӑхӑнманлӑхшӑн, монополисем пуҫ пулса тӑнине хирӗҫ кӗрешес ӗҫре активлӑ вӑй пулса тӑмалла; тӗнчери суту-илӗве вӑйлатассишӗн, наци промышленноҫне аталантарассишӗн, пӗр-пӗрне хисеплес никӗс ҫинче экономика тӗлӗшпе халӑхсем хушшинче тачӑ ҫыхӑну тытассишӗн кӗрешмелле.

Профсоюзсен рабочисен анлӑ массисене организацилемелле, патриотла аслӑ юхӑма пӗрлештермелле. Вӗсен нацилле пӗрлӗх фронтӗнче, халӑхӑн тӗрлӗ сийӗсене хутшӑнтаракан фронтра, ертсе пыракан вырӑн йышӑнмалла.

Колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи профсоюзсен юхӑмӗпе метрополисенчи профсоюзсен юхӑмӗ хушшинчи ҫыхӑнӑва тӗреклетмелле, колониллӗ тата ҫурма колониллӗ ҫӗршывсенчи рабочисем хушшинче тачӑ ҫыхӑну туса хумалла, вӗсен кӗрешӗвӗнче пӗрлӗх пулмалла; Совет Союзӗнчи, Китайри тата халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи рабочисемпе тата профсоюз организацийӗсемпе тытакан ҫыхӑнӑва ҫирӗплетмелле.

Октябрӗн 19-мӗшӗнчи ирхи лару

ВЕНА, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери виҫҫӗмӗш конгресӗн ирхи ларӑвӗнче Виджаджасастра докладне сӳтсе явма тытӑннӑ. Израильри араб халӑхӗн представителӗ Рустума Бастуни Израильри малта пыракан рабочисем еврей халӑхӗпе араб халӑхӗ хушшинче пӗрлӗх фрончӗ туса хурасшӑн кӗрешни ҫинчен каласа панӑ.

Франци Гвинейинчи ӗҫсыннисен представителӗ Драме Умур Гвинейӑри федеральнӑй профсоюзсен пӗрлешӗвӗн членӗсем хӑйсен пурнӑҫ условийӗсене лайӑхлатассишӗн кӗрешни ҫинчен каланӑ.

Узбек ССР-ӗнчи профсоюзсен представителӗ Джура Ходжаев ҫапла каланӑ: совет профсоюзӗсем колонисенчи ӗҫсыннисен ирӗклӗхшӗн тата наци никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн кӗрешнине лайӑх ӑнланаҫҫӗ, вӗсем Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ колониллӗ тата пӑхӑнса тӑракан ҫӗршывсенчи профсоюзсене пулӑшас тӗлӗшпе туса ирттерекен ӗҫсене ырлаҫҫӗ.

Ходжаев Узбекистанра промышленность, ялхуҫалӑхӗ тата культура аталанса пыни ҫинчен каласа панӑ. Октябрь революцийчен Узбекистан правасӑр тата кая юлнӑ колонисенчен пӗри пулнӑ.

Совет влаҫӗн ҫулӗсенче, тенӗ вӑл, Узбекистанра пин ытла пысӑк заводсем, фабрикӑсем, шахтӑсем, нефть промыслисем тата ыттисем те туса лартнӑ. Промышленноҫӑн ҫӗнӗ отраслӗсем ӗҫлеме пуҫланӑ. 1913 ҫулхипе танлаштарсан, йывӑр промышленность туса кӑларакан продукци 213 хут ӳснӗ. Дехкансен вак хуҫалӑхӗ вырӑнне коллективлӑ шултра хуҫалӑхсем туса хунӑ. Вӗсене кучухнехи хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарнӑ. Ҫӗр мамӑкӗ тата апат-ҫимӗҫпе техникӑлла культурӑсем туса илесси ҫултан-ҫул ӳссе пырать. Колхозниксен тупӑшӗсем ӳсеҫҫӗ.

Делегатсем Албанири ӗҫсыннисен представителӗ Аимо Кокани тухса каланине питӗ интересленсе итленӗ. Вӑл ҫапла каланӑ: Луи Сайян, Ди Витторио тата Виджаджасастра доклачӗсем Профсоюзсен Пӗтӗм тӗнчери федерацийӗ мӗнпур ҫӗршывсенчи рабочи класӑн пӗрлӗхне тӗреклетессишӗн, миршӗн, демократишӗн, лайӑх пурнӑҫшӑн татӑклӑн кӗрешнине ӗненмелле кӑтартса параҫҫӗ.

Кокани ют ҫӗршыв империалисчӗсен пусмӑрне тата ҫурма колониллӗ режима тӗп тунӑ хыҫҫӑн Албани халӑхӗ ҫӗнӗ пурнӑҫ туни ҫинчен каласа панӑ.

Кокани ҫапла шантарса каланӑ: Албанири рабочи класс тата профсоюзсен пӗрлешӗвӗ пӗрлӗхе тӗреклетессишӗн активлӑ кӗрешӗ, Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери федерацине ялан пулӑшса тӑрӗ.

Ирхи ларура ҫавӑн пекех Суданри ӗҫсыннисен профсоюзӗсен пӗрлешӗвӗн генеральнӑй секретарӗ тата Профсоюзсен пӗтӗм тӗнчери федерацийӗн вице-председателӗ Диалло; Алжирти, Парагвайри, Бельгийски Конгори тата ытти ҫӗршывсенчи ӗҫсыннисен представителӗсем тухса каланӑ.

Китай Халӑх Республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Чжоу Энь-лай Корея ыйтӑвӗ тӑрӑх политикӑлла конференци ирттерес пирки янӑ ҫыру

ПЕКИН, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви ҫапла пӗлтерет:

Паян Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительствин Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Чжоу Энь-лай Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви политикӑлла конференци пирки панӑ посланине хирӗҫ ҫыру янӑ. Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствине пама ҫак ҫырӑва Китай Халӑх Республикин ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви Швеци посольствине ярса панӑ. Ҫырӑва паян каҫхине ООН Генеральнӑй Ассамблейине ярса панӑ.

Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Чжоу Энь-лай янӑ ҫырура ҫапла каланӑ:

Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви 1953 ҫулхи октябрӗн 14-мӗшӗнче Швеци правительстви урлӑ ярса панӑ посланине асра тытма йышӑнчӗ тата Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин правительствипе пӗрле тӗпчесе вӗренчӗ.

Халӗ эпӗ Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви ячӗпе ҫапла пӗлтерме полномочи илнӗ:

1. Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви октябрӗн 14-мӗшӗнче панӑ посланире ҫапла калать: перемири ҫинчен калаҫусем ирттернӗ чухне Корейӑпа Китай енӗн делегацийӗн пуҫлӑхӗ генерал Нам Ир политикӑлла конференцие интересленекен икӗ енӗн правительствисем кӑна хутшӑнмалла тӑвассишӗн тӑнӑ. Ку вӑл пачах тӗрӗс мар. Корейӑра перемири тӑвасси ҫинчен пынӑ калаҫусен кун йӗркин 5-мӗш пунктне 1952 ҫулхи февраль уйӑхӗнче сӳтсе явнӑ чухне ООН командованийӗн калаҫусене хутшӑннӑ представителӗ Корейӑри вӑрҫа хутшӑннӑ тепӗр енӗн йышӗ шутне пур майсемпе те ООН-ӑн Корейӑри вӑрҫа хутшӑнман членӗсен ытларахӑшне кӗртме тӑрӑшнӑ. Ҫавӑнпа та генерал Нам Ир калаҫусем пынӑ вӑхӑтра «вӑрҫӑ вӑрҫакан енӗсен интересленекен ҫӗршывсен правительствисем» камсем пулмалли ҫинчен калакан сӑмах пӗлтерӗшне тӗплӗн ӑнлантарса панӑ, ҫак сӑмахсем вӗсем, пӗр енчен демократиллӗ Корея Халӑх Республикипе Китай Халӑх Республикин правительствисем пулмаллине, тепӗр енчен. ООН командованийӗн интересленекен ҫӗршывсен правительствисем пулмаллине кӑтартса панӑ. Генерал Нам Ир ҫавӑн пекех тата ООН-ӑн Корейӑри вӑрҫа хутшӑнман членӗсен ытларахӑшне Корейӑра вӑрҫӑ вӑрҫакан тепӗр енӗнчен калаҫӑва хутшӑнтарма юраманнине кӑтартса панӑ. Ун чухне ООН командованийӗн представителӗ Джой вице-адмирал ҫакӑн пек ӑнлантарса панине килӗшнӗ. Перемири ҫинчен калаҫусем пынӑ вӑхӑтра Корейӑпа Китай енӗн делегацийӗ интересленекен ытти нейтральнӑй государствӑсем политикӑлла конференцие хутшӑнмалла мар текен шухӑша нихҫан та тытман. Ҫавӑн пекех перемири ҫинчен тунӑ килӗшӗвӗн 60-мӗш параграфӗ тӑрӑх интересленекен ытти нейтральнӑй ҫӗршывсем политикӑлла конференцие хутшӑнмалла мар тесе вывод тума ҫук. Малалла, ООН Генеральнӑй Ассамблейин 430-мӗш пӗрлехи ларӑвӗ йышӑннӑ «Б» резолюцире ҫавӑн пекех вӑрҫӑ вӑрҫакан нихӑш ҫӗршыв енче те пулман Совет Союзӗ политикӑлла конференцие хутшӑнма пултарать тесе каланӑ. Ҫакна илсе кӑтартни те ӗнтӗ политикӑлла конференци йышӗ вӑрҫӑ вӑрҫакан икӗ енӗ хутшӑннипе чарӑнса тӑмалла мар текен принципа ООН членӗсен ытларахӑшӗ ырланӑ тесе ҫирӗплетсе калама ҫителӗклӗ. Ҫавӑнпа та Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви ҫапла шутлать: вӑл яланах ҫине тӑрса хӳтӗлекен сӗнӳ питех те тӗрӗс сӗнӳ пулса тӑрать. Политикӑлла конференцие Корейӑра вӑрҫӑ вӑрҫакан икӗ енӗсӗр пуҫне интересленекен нейтральнӑй ҫӗршывсем, уйрӑмах Азири интересленекен нейтральнӑй ҫӗршывсем хутшӑнни кирлӗ.

2. Сӳте каланисем тӑрӑх, Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн Генеральнӑй Ассамблейин Китай Халӑх Республикипе Корея Халӑх Республикин правительствисем сентябрӗн 13-мӗшӗнче тата сентябрӗн 14-мӗшӗнче генеральнӑй секретарь Даг Хаммаршельд господин патне янӑ телеграммӑсенче кӑларса тӑратнӑ сӗнӳсене йышӑнмалла пулнӑ ӗнтӗ; унӑн политикӑлла конференцие тулли йышпа пухма, вӑрҫӑ вӑрҫакан икӗ енне тата интересленекен ытти нейтральнӑй ҫӗршывсене кӗртсе пухма сӗнӳ памалла пулнӑ ӗнтӗ. Анчах та Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн Генеральнӑй Ассамблейи Корейӑпа Китай енӗн тӗрӗс сӗнӗвӗсене сирсе пӑрахрӗ, сахалрахӑшӗн ирӗкне пӑхӑнчӗ, ҫапла вара Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн Уставӗн тӗллевӗсемпе принципӗсене хирӗҫ пычӗ. Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви ҫакӑн пирки чӗререн пӑшӑрханни ҫинчен тепӗр хут каламасӑр ирттерме пултараймасть.

3. Эпир политикӑлла конференци тӗлӗшпе йышӑннӑ принциплӑ позици тӑрӑх тата пӗтӗм тӗнчери ҫынсем политикӑлла конференцие хӑвӑртрах пухма ыйтнине шута илсе, Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви, Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин правительствипе консультаци ирттернӗ хыҫҫӑн, политикӑлла конференци ҫинчен тӑракан ыйту пирки Пӗрлешӳллӗ Штатсен представителӗсемпе калаҫусем ирттерме Паньмыньчжоне октябрӗн 26-мӗшӗнче хӑйсен представителӗсене яма килӗшет.

4. Китай Халӑх Республикин Центральнӑй халӑх правительстви ҫапла шутлать: ҫак калаҫусенче килӗшсе татӑлмалли ыйтусен шутне политикӑлла конференцие ирттермелли вырӑна тата вӑхӑта палӑртасси ҫинчен тӑракан ыйтӑва, Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительстви панӑ посланире сӗннӗ тӗрлӗрен процедура, административлӑ тата ытти ыйтусене кӗртме пулать. Анчах та Центральнӑй халӑх правительстви халичченхи пекех ҫапла шутлать: ҫак калаҫусенче политикӑлла конференци йышӗ ҫинчен тӑракан ыйтӑва татса парасси тата ытларах кирлӗ ыйту пулса тӑрать. Ҫакна май Центральнӑй халӑх правительстви ҫапла пӗлтерет: вӑл ҫав калаҫусем вӑхӑтӗнче политикӑлла конференци йышӗ ҫинчен сӳтсе явас тата татса парас тӗллевпе тепӗр хут ыйту хускатма хӑйӗн право пур тесе шутлать.

ЧЖОУ ЭНЬ-ЛАЙ,
Китай Халӑх Республикин Центральнӑй Халӑх Правительствин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ.

ПЕКИН. 1953 ҫулхи октябрӗн 19-мӗшӗ.

* * *

Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Нам Ир та паян Пӗрлешӳллӗ Штатсен правительствине ҫакӑн пек ҫыру ярса панӑ.

Совет ҫар карапӗсем Сталин портне пырса ҫитнӗ

СОФИЯ, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Паян вице-адмирал В. А. Пархоменко ертсе пыракан совет ҫар карапӗсем Болгарири Сталин портне пырса ҫитнӗ. Совет ҫар карапӗсене тинӗсре Болгари ҫар карапӗ кӗтсе илнӗ. Карапсем тӗл пулнӑ чухне нацисен ячӗпе тупӑсенчен персе салют панӑ. Совет ҫар карапӗсем Сталин порчӗ патӗнче чарӑнса тӑнӑ.

Тинӗс ҫыранӗ хӗрринчи бульвара тата тинӗс ҫыранӗ хӗрринчи парка совет морякӗсене йышӑнса илме ӗҫсыннисем пиншерӗн пухӑннӑ. Хулана уяв чухнехи пек илемлетнӗ.

Вице-адмирал В. А. Пархоменко, офицерсен ушкӑнӗпе пӗрле, Болгарин тинӗс ҫар вӑйӗсен командующийӗ тата ӗҫсынни депутачӗсен Сталин хулинчи халӑх совечӗн председателӗ патӗнче пулнӑ.

Совет ҫар карапӗсем Констанца портӗнчен тухса кайнӑ

БУХАРЕСТ, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). Паян ирхине вице-адмирал В. А. Пархоменко ертсе пыракан совет ҫар карапӗсен отрячӗ Констанцӑран тухса кайнӑ. Ҫак отряд Румыни Халӑх Республикин правительстви чӗннипе темиҫе кун каярах Румынири Констанца портне официальнӑй йӗркепе пынӑ пулнӑ.

СОВЕТ КИНОФИЛЬМӖ ПӖРРЕМӖШ ПРЕМИ ИЛНӖ

РИМ, октябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС). Октябрӗн 3-мӗшӗпе 14-мӗшӗ хушшинче Римра ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӑларнӑ кинофильмсен пӗтӗм тӗнчери фестивалӗ пулса иртнӗ. Пӗтӗм тӗнчери ялхуҫалӑх дирекцийӗ пуҫарнипе ирттернӗ фестивальре 28 ҫӗршывран 300 ытла кинокартина кӑтартнӑ. Кинофестивале Франци, Англи, Итали, Швейцари, Швеци, Голланди, Норвеги, Инди, Аргентина, Япони, Совет Союзӗ, США тата ытти ҫӗршывсем хутшӑннӑ.

Ӗнер ялхуҫалӑх выставкин кинотеатрӗнче жюри лайӑх фильмсемшӗн преми парасси ҫинчен йышӑннӑ решение вуласа панӑ. Илемлӗ, тулли метражлӑ фильмсем тӑрӑх «Ылтӑн пучах» ятлӑ пӗрремӗш премие Совет Союзӗн «Возвращение Василия Бортникова» кинокартинишӗн памалла тунӑ.

КИТАЙРА И. В. СТАЛИН СОЧИНЕНИЙӖСЕНЕ ПИЧЕТЛЕСЕ КӐЛАРАҪҪӖ

ПЕКИН, октябрӗн 19-мӗшӗ. (ТАСС). «Чжунсуюхаобао» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, «Женьминьчубаньшэ» издательстви И. В. Сталин Сочиненийӗсен пӗрремӗш томне китай чӗлхипе куҫарса кӑларнӑ.

И. В. Сталин произведенийӗсене пичетлесе кӑларни, тесе ҫырать хаҫат, марксизм-ленинизма вӗренес ӗҫре тата государство строительствинче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Хальхи вӑхӑтра «Синьхуашудянь» типографийӗн Пекинри пӗрремӗш уйрӑмӗнче И. В. Сталин Сочиненийӗсен иккӗмӗш томне наборлаҫҫӗ. Вӑл 1954 ҫулхи февраль уйӑхӗнче пичетленсе тухать.

Чӑваш композиторӗсен отчечӗ

Ҫав кунсенче Мускавра ССР Союзӗнчи композиторсен союзӗн секретариатӗнче чӑваш композиторӗсен творчествӑлла отчечӗ пулнӑ. Унта Ф. Лукин, Г. Хирбю, Г. Лебедев, Т. Фандеев, А. Токарев, А. Васильев, Г. Лисков тата ытти композиторсем ҫырнӑ 30 произведение—хорпа тата пӗччен юрламалли юрӑсене, оркестрпа выляма ҫырнӑ произведенисене итленӗ.

Чӑваш композиторӗсен произведенийӗсене сӳтсе явас ӗҫе ҫӗршыври паллӑ композиторсем Ю. Шапорин, Т. Хренников, М. Коваль тата ыттисем те хутшӑннӑ. Вӗсем юлашки ҫулсенче чӑваш совет музыки палӑрмалла ӳсӗмсем тунине, уйрӑмах тематика тӗлӗшӗнчен произведенисем ку чухнехи пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑнса тӑнине палӑртнӑ. Тухса калакансем Ф. Васильевӑн мир ҫинчен ҫырнӑ сюитине, А. Васильевӑн «Миршӗн кӗрешекенсен юррине», А. Тогаевӑн тата Ф. Васильевӑн «Ҫамрӑксен таппине», Ф. Лукинӑн «Колхоз хӗрӗсен юррине» пысӑк хак панӑ.

Ҫав вӑхӑтрах ҫитменлӗхсене те палӑртнӑ. Ҫитменлӗхсем уйрӑмах музыка произведенийӗсене ӑсталӑх енчен начар ҫырнинче палӑраҫҫӗ.

ССР Союзӗнчи композиторсен союзӗн секретариачӗ чӑваш композиторӗсен творчествӑлла отчечӗсене тӑтӑшах ирттерме, вӗсен произведенийӗсене час-часах итлеме тата чӑваш композиторӗсене ӗҫре ҫителӗклӗ пулӑшу пама йышӑннӑ.

Колхозсенчи пӗвесемпе водопроводсем

Республикӑри колхозсенче пӗвесем, пӑраланӑ ҫӑлсем тата выльӑх-чӗрлӗх фермисене шыв парса тӑмалли водопроводсем тӑвасси ҫулсеренех вӑйланса пырать. Колхозсенче пӗвесем туни пахча ҫимӗҫ туса илессине лайӑхлатма, выльӑх-чӗрлӗх валли шыв парса тӑрассине ҫӑмӑллатма чылай пулӑшать. Иртнӗ ҫулсенче пӗвесемпе ҫӑлсен хисепӗ уйрӑмах ӳснӗ. Юлашки виҫӗ ҫул хушшинче кӑна ҫичӗ пысӑк пӗве, 23 колхозра водопровод тата пӑраланӑ ҫӑлсем 20 ытла тунӑ.

Кӑҫал та республикӑри Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерствин «Водстрой» кантурӗ пӗвесемпе ҫӑлсем тӑвассине чылай ҫӗрте йӗркеленӗ. Канаш районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан, «Красное пламя», Ишлей районӗнчи «Победа» тата республикӑри ытти колхозсенче пурӗ ҫичӗ пӗве тӑваҫҫӗ, Улатӑр районӗнчи «Победа Октября», «Путь Ильича» тата ытти районсенчи ҫичӗ колхозра выльӑх-чӗрлӗх фермисенче водопровод тунӑ, ҫӗнӗрен ҫичӗ колхозра водопровод тӑваҫҫӗ. Ҫӑлсем те кӑҫал ҫичӗ ялта тунӑ. Тӑваттӑмӗш кварталта тата ултӑ ҫӑл туса пӗтерме палӑртнӑ.

Улатӑр, Сӗмӗрле, Пӑрачкав, Хӗрлӗ Чутай районӗсенчи шыв-шурлӑ ҫӗрсене нумай типӗтнӗ, шурлӑхлӑ вырӑнсене типӗтмелли каналсем чавнӑ, киввисене тасатнӑ. Кӑҫал Канаш районӗнче пулӑ ӗрчетмелли питомник тума тытӑнаҫҫӗ. Унта сӳтӑ карп ӗрчетме палӑртнӑ. Ҫак пӗвери шыв тӑракан лаптӑк 10 гектар чухлӗ пулать. Питомникӑн сӑнав ӗҫӗсем тумалли пысӑк лаборатори, пурӑнмалли ҫурт, пӑр хумалли вырӑн тата ытти ҫуртсем пулаҫҫӗ. Ҫак питомнике тума ҫур миллион тенкӗ ытла укҫа уйӑрнӑ.

(Хамӑр инф.).

ПӖЛТЕРНИ

Октябрӗн 21-мӗшӗнче, 19 сехетре, Советсен ҫурчӗн пысӑк залӗнче пропагандистсемпе консультантсем, докладчиксемпе агитаторсем валли лекци пулать: Тема: «КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗн итогӗсем».

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ — чӑвашла спектакльсем: октябрӗн 21-мӗшӗнче «Виҫӗ туй», октябрӗн 22-мӗшӗнче «Энтип», октябрӗн 23-мӗшӗнче «Ҫемье чысӗ».

Октябрӗн 24-мӗшӗнче, республикӑри вырӑс драма театрӗн ҫӗнӗ сезонӗ пуҫланнӑ кун, вырӑсла спектакль — «Беспокойная должность».

Спектакльсем каҫхине 7 сехет те 30 минутра пуҫланаҫҫӗ. Касса кӑнтӑрла иртсен 4 сехетре уҫӑлать.

КИНО

«УДАРНИК»—октябрӗн 21-мӗшӗпе 22-мӗшӗнче Чехословакире ӳкернӗ илемлӗ фильм «Анна пролетарка». Сеанссем пуҫланаҫҫӗ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м., 20 с. 15 м.

Шупашкарти тата республикӑри экрансем ҫинче
„КОРАБЛИ ШТУРМУЮТ БАСТИОНЫ"
(«Адмирал Ушаков», II-мӗш сери)
ятлӑ ҫӗнӗ илемлӗ фильм кӑтартма пуҫлаҫҫӗ.
Сценари авторӗ — А. Штейн.
Фильма лартаканӗ — Михаил Ромм.
Композитор — А. Хачатурян.
Юрӑ сӑмахӗсен авторӗ — А. Сур[illegible].
Главнӑй консультант — И. Исаков.
Рольсене вылянӑ артистсем:
И. Переверзев, Г. Юдин, В. Дружников, А. Алексеев, В. Балашов, С. Бондарчук, Н. Хрящиков, М. Пуговкин, Г. Юматов, П. Волков, П. Любешкин, С. Петров, Н. Свободин, П. Павленко, М. Названов, И. Соловьев, И. Толчанов, Е. Кузьмина, В. Туманов, Н. Волков, С. Мартинсон, А. Войцик, Б. Бибиков, Э. Геллер, В. Лекарев.
Ленин орденлӗ «Мосфильм» киностудийӗ 1953 ҫулта ӳкернӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, обзорсен пайӗ—6-84, пропаганда пайӗ—5-21, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 09606 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2357. Тираж 20.000 экз.